# 3–4 ÇУЛХИ АЧАСЕН ВĂЙĂ ХĂНĂХĂВĔСЕНЕ АТАЛАНТАРАССИ

Шкул умĕнхи вĕренĕвĕн программине пурнăçлакан
воспитательсем валли хатĕрленĕ меслет кăтартăвĕ

Шупашкар
2022

**УДК** 373.2
**ББК** 74.100
В53

Пухса хатĕрлекенĕ – ***Н.В. Доброва***, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ

Пособие хатĕрлеме хутшăннă педагогсем:

**О.Н. Мудрецова,** Чăваш Республикинчи Елчĕк районĕнчи Елчĕкри «Чебурашка» ача сачĕн воспитателĕ,

**Ф.Р. Петрова**, Чăваш Республикинчи Елчĕк районĕнчи Елчĕкри «Чебурашка» ача сачĕн воспитателĕ,

**Н.Н. Андреева**, Чăваш Республикинчи Канаш районĕнчи Уçырмари «Хĕвел» ача сачĕн воспитателĕ

В53 3–4 çулхи ачасен вăйă хăнăхăвĕсене аталантарасси / Н.В. Доброва пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, 2022. – 68 с.

Меслет кăтартăвне «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» программăпа ĕçлекен педагогсене пулăшас тĕллевпе хатĕрленĕ.

**УДК** 373.2
**ББК** 74.100

© Доброва Н.В., пухса хатĕрлени, 2022
© ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, 2022

# УМĔН КАЛАНИ

Тăвата çула кайнă ачасен аталанăвĕнче сюжетлă, рольлĕ вăйăсем ытларах тĕл пулаççĕ. Ку вăйăсем ăсра сăнарлама пултарнипе (роле ăнланса йышăнма, ăна сăнарлама тата шухăшласа кăларнă лару-тăрура выляма пултарни) тачă çыхăннă. Воспитатель вăйă ситуацийĕсем йĕркелесе пĕр-пĕр сюжет шухăшласа кăларать, ăна конкретлă лару-тăрура ачасене туллин ăнланса илсе сăнарсем урлă кăтартса пама вĕрентет.

Ку ўсĕмри ачасем хăйсене пĕр-пĕр герой ячĕпе йышăнма пултараççĕ ĕнтĕ. Вĕсене вăйăра ертсе пырса унти хусканусене ылмаштарса пынипе пĕрлех воспитатель анлăрах, йывăртарах задачăсем лартать, çĕнĕ сăнарсем кĕртсе пырать, тĕрлĕ чĕр чунсем урлă çынсен хутшăнăвĕсемпе паллаштарать.

3–4 çулхи ачасем хăйсен тантăшĕсемпе ытларах интересленме тытăнаççĕ, ытти ачасем мĕнле вăйăсем вылянине сăнаççĕ, хаваспах пĕрле выляççĕ.

Ушкăнри вăйă кĕтесĕсем тĕрлĕ лару-тăрура усă курма май пур тĕрлĕ енлĕ теттесемпе пуянланса пыраççĕ. Воспитатель вара вĕсем мĕн тума кирлине вăйă ситуацийĕсенче тĕрлĕ рольсем урлă кăтартса парать. Ачасемпе пĕрле хутшăнса выляни çителĕксĕр, педагогăн ачасем хăйсем тĕллĕн выляма пултарнине те аталантармалла. Ачасен вăййисене тимлĕн сăнаса пырса воспитатель хăйĕн малашнехи задачисене палăртса пырать: ачасене мĕн ытларах интереслентерет, кашни тетте е хатĕр мĕн тума кирлĕ пулнине пĕлеççĕ-и, мĕнле усă курмалла вĕсемпе – çак ыйтусене роль урлă тĕрлĕ сюжетсенче татса памалла.

Тăвата çула кайнă е тăвата çулхи ачасемшĕн çакăн пек сюжетлă вăйă ситуацийĕсем çывăх пулмалла:

пуканепе вылясси (çемьелле);

машинăсемпе е ытти транспорт хатĕрĕсемпе вылясси;

чĕр чунла тата тетте чĕр чунсемпе вылясси;

лавккалла вылясси;

больницăлла вылясси;

парикмахерскилле вылясси;

мастерскойла вылясси; почтăлла вылясси.

Ку ўсĕмри ачасене выляма вĕрентни кăна мар, вăйă вăхăтĕнче вĕсем вăйăйа хутшăнакан тантăшсемпе е вăййа хутшăнакан çитĕннĕ çынсемпе калаçу йĕркелеме хăнăхни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăййа теттесемсĕр пуçне пĕр-пĕр çитĕннĕ çын рольне кĕртни аван. «Çемьелле» вылянă чух шăпах «ачапа ача» тата «ачапа çитĕннĕ çын» хутшăнăвĕсемпе паллаштарма пулать. Çак

кĕнекере илсе кăтартнă вăйăсенех педагог ытти ситуацисенче урăх тĕллевсемпе те усă курма пултарать, хăш-пĕр рольсене кăларса пăрахма е çĕннисене кĕртме пултарать. Тĕп вырăнта вĕрентни мар, ачасен кăмăл-туйăмĕ пулмалла. Шăпарлан ача садĕнче те, килте те вылять. Çавăнпа та вăйă сюжечĕсене, мĕнле сăнарсене ăса хывмаллине ашшĕ-амăшĕн пĕлсе тăмалла. Ача садĕнче «çемьелле» выляççĕ пулсан – килте чăн çемьере те тĕрлĕ ситуацисем йĕркелесе пĕр-пĕринпе хутшăнма вĕрентмелле. Ача аталанăвĕ тухăçлă пулса пытăр тесен педагогпа ашшĕ-амăшĕн тачă çыхăнса ĕçлемелле. Пĕрле ĕçлесен çеç палăртнă тĕллевсене туллин пурнăçлама пулать. Воспитателĕн те, ашшĕ-амăшĕн те яланах асра тытмалла: 3–4 çулхи ачасемшĕн йĕри-таврара мĕн пулса иртни, мĕн курни пĕтĕмпех интереслĕ. Вĕсем кунĕпех «ку мĕн?» е «мĕншĕн вăл çапла тăвать?» йышши ыйтусем пама пултараççĕ. Вĕсен пĕлес килнипе вăхăтлă та пĕлсе усă курса ачасен ăс-тăнне, калаçу чĕлхине аталантарасчĕ.

Пурне те ăнăçу сунатпăр!

# Авăн уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

## *1-мĕш вăйă.* **«Çаран çинче»**

***Тĕллевсем:*** ачасене вăйăпа кăсăклантарасси; савăнăçлă кăмăл-туйăмпа хавхалантарасси; таса та уçă калаçассине аталантарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем*****:** упа, кăвакал, сăпса, пукане теттесем.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене «симĕс çаран» патне илсе пырать, хитре чечекпе, симĕс курăкпа килентерет, хĕвел ăшшипе савăнма сĕнет. Ачасем карталанса тăраççĕ, хусканӳ вăййи выляççĕ.

***«Кăвакал» юрă майăн хусканасси.***

Воспитательпе ачасем кăвакал пек хускалса «çырма» хĕррине утаççĕ.

Нарт-нарт кăвакал
Кӳлĕ тавра çаврăнать,
Ик çунатне шарт çапать.

Ачасем пĕр-пĕрин хыççăн утаççĕ, аллисемпе çӳлелле тата аялалла сулласççĕ, урисемпе тапăртатса илеççĕ.

Нарт-нарт кăвакал
Шыва чăмать, çухалать,
Лăпкă шыва хумхатать.

Ачасем çурăм çине выртаççĕ, хырăм çине çаврăнаççĕ, аллисемпе айккинелле тата çӳлелле силлеççĕ.

Нарт-нарт кăвакал
Шывран тухать, савăнать,
Сар сăмсине вылятать.

Ачасем сапаланса утаççĕ: лараççĕ, чĕркуççине икĕ алăпа çавăрса тытаççĕ.

Нарт-нарт кăвакал
Чĕпписене йыхăрать,
Киле ертсе таврăнать.

Ачасем пĕр-пĕрин хыççăн кукленсе утаççĕ: аллисене чавсаран хуçлатнă, пӳрнисене сарса тытнă.
Воспитатель ачасене картана пуçтарать, çĕнĕ вăйă выляма хавхалантарать.

***Сасӑ калассине аталантармалли тата сывлӑха ҫирӗплетмелли «Пыл хурчӗсем» вӑййӑ.***

Ачасем ал лаппине хулпуҫҫи ҫине хунӑ, «ҫуначӗсене» ҫӑмӑллӑн силлесе илеҫҫӗ:
«З-з-з», – тесе калаҫҫӗ.
Пӳлӗмӗн пӗр енче вӗллесем вырнаҫнӑ. Ачасем алӑран алӑ тытса, карталанса утаҫҫӗ.
Малтан – майӗпен, кайран васкаса утаҫҫӗ.

З-з-з – сӑпсасем,
З-з-з – сӑпсасем,
Пурте вӗллене,
Пурте вӗллене!

«Упа килет!» тесе кӑшкӑрсан, ачасем вӗллене «вӗҫсе» кӗреҫҫӗ.
Вӑййа виҫӗ хутчен выляма юрать.
Воспитатель «каҫ пулчӗ» тесе ачасене лӑпланма сӗнет, аллине пукане тытса
сӑпка юрри кӗвӗлеме пуҫлать.

Пилеш йывӑҫ – пӗкечи,
Ҫӗмӗрт йывӑҫ – сиктӗрми.
Ҫывӑр тутлӑ ыйхуна,
Курах хитре тӗлӗкне.
Аҫу килсен ҫупӑрлӗ,
Аннӳ килсен юратӗ.

Ачасене хитре кӑкшӑмран ӑшӑ сӗт ӗҫтерме юрать.

## *2-мӗш вӑйӑ.* «Шурлӑхри шапасем»

***Тӗллевсем****:* ӑсра сӑнарланине аталантарасси, пӗр-пӗринпе калаҫма хӑнӑхни; калаҫура усӑ куракан сасӑ юххин хӑйне май ҫеммине палӑртуллӑ усӑ курма вӗрентесси; юмахри сюжет аталанӑвне драмӑласа кӑтартма хӑнӑхтарасси.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** шапа шапкисем; фланелеграф ҫинче кӑтартма кирлӗ ӳкерчӗксем (пысӑк тата пӗчӗк шапа, ҫӑхан, чарлан).

В ӑ й ӑ  ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасене шурлӑхра кам концерт йӗркеленине пӗлме сӗнет.
(Шапа кваклатнӑ сасӑ илтӗнет.) Унтан ачасем воспитатель сӑвӑ вуланине итлеҫҫӗ.

Шӑпах пӗве хӗрринче.
Шывӗ те, ав, чӳхенмест,
Хӑмӑшӗ те хумханмасть,
Вӑрансамӑр, ачасем!

Ачасем сиксе тухаççĕ, алла-аллăн тытăнса çаврăнаççĕ.

Пĕрре, иккĕ! Ква-ква-ква!
Йăмăксемпе пиччесем!
Пĕрре, иккĕ! Ква-ква-ква!
Пурте пĕрле савăнар!

Ачасем ква-ква-ква! кăшкăрса сиксе çаврăнаççĕ.

Эпир симĕс ачасем,
Пĕвере ларасшăн мар!
Выляр урлă сикмелле,
Туслăн пĕрле пухăнар!

Ачасем ква-ква-ква! кăшкăрса сиксе çаврăнаççĕ.

Пĕрре, иккĕ! Ква-ква-ква!
Йăмăксемпе пиччесем!
Пĕрре, иккĕ! Ква-ква-ква!
Пурте пĕрле савăнар!

Ачасем ква-ква-ква! кăшкăрса сиксе çаврăнаççĕ, тенкелсем çине вырнаçса лараççĕ.

***«Шапасем калаçни» юмаха фланелеграф çинче кăтартни.***

В о с п и т а т е л ь. Пурăннă тет икĕ шапа, икĕ туслă юлташ. Вĕсем ăшă çумăр çунине юратнă. Шапасем нӳрĕк çанталăкра çырма хĕрринче пĕр сассăр лараççĕ. Час-час, вĕттĕн-вĕттĕн çунă çумăр вĕсене килĕшет, тирĕ вара якалса каять. Çумăр чарăнсанах шапасем калаçма пуçлаççĕ. Пысăк шапан сасси хулăн, пĕчĕккин вара çинçе.

П ы с ă к  ш а п а. Ква-ква! Юлташăм, мĕнле илемлĕ çанталăк!

П ĕ ч ĕ к  ш а п а. Ква-ква! Чăн та, тĕлĕнмелле!

П ы с ă к  ш а п а. Савăннипе юрлас килет! (*Юрлать.*) Ква-ква-ква! Мĕнле лайăх-ха пирĕн çырма!

П ĕ ч ĕ к  ш а п а. (*Юрлать.*) Ква-ква-ква! Пирĕн çырма пек хитри урăх çук ниçта та!

В о с п и т а т е л ь. Çапла çĕрĕпе кваклатаççĕ шапасем. Пĕррехинче вĕсем патне вăрăм чарлан килет, шурлăхра вĕсене хăратать.

Ч а р л а н. Парăр мана шапасем! Çуллисене, мăнтăррисене халех çăтса яратăп!

В о с п и т а т е л ь. Çӳлте хура çăхан вĕçсе иртет, шапасене кăшкăрать.

Ç ă х а н. Кранк-кранк! Тарăр, пытанăр! Чарлан апатланма килет.

В о с п и т а т е л ь. Çапла кăшкăрчĕ те ват çăхан вĕçсе кайрĕ. Шапасем çакна илтсе часрах тĕм хыçне пытанчĕç, шăп лараççĕ. Чарлан калла-малла

утрĕ, никама та тупаймарĕ. Çапла çĕр те иртрĕ. Шапасем ир пулсан хӑйсен юррине савӑнӑçлӑн юрлама пуçларĕç.

Воспитатель ачасене ыйту парать: «Ачасем, сире юмах килĕшрĕ-и? Тĕп сӑнарсем мĕнсемччĕ? Шапасем мĕн çинчен калаçрĕç? Шурлӑха мĕн килчĕ? Шапасене мĕн пулӑшрĕ? Чарлан шапасене мĕншĕн тупаймарĕ?»
Воспитатель юмаха фланелеграф çинче ӳкерчĕксемпе кӑтартса каласа парать.
Вара юмахри персонажсен сӑнарĕсене сӑнлама хушать: «Шапасем мĕнле сасӑпа калаçнине кӑтартса парӑр-ха. Ватӑ çӑхан мĕнлерех-ши? Чарлан шурлӑхра утнине кӑтартӑр-ха. Шапасем мĕнле пытаннӑ? Савӑннипе мĕнле юрӑ юрланӑ?».

## *3-мĕш вӑййӑ.* **«Марук чӑххисем»**

***Тĕллевсем:*** Кӑмӑл-туйӑма çĕклентересси, воспитатель кӑтартнӑ сюжета тӑнлама вĕрентесси, калаçӑва хутшӑнтарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** пӳлĕме карса уйӑрма лартакан хутламлӑ рама, асанне тумĕ, алла тӑхӑнса вылятмалли теттесем: автан, чӑх, тилĕ, Марук пукане.

В ӑ й ӑ   ю х ӑ м ĕ

Воспитатель, асанне тумне тӑхӑннӑскер, ачасене кил картине чĕнет. Картара автанпа чӑхсем пурӑнни çинчен калать. Алла тӑхӑнса вылятмалли теттесемпе вӑл ачасене сценка выляса кӑтартать.

***«Тилĕ чӑх витинче» сценка.***

А с а н н е.

Çатан çинче шур автан
Çунат çапса авӑтать:
Ку-ка-рек-кук!
Ку-ка-рек-кук!

Пĕр ачи автан пек уткалать.

Сарайĕнчи сар чӑххи
Сар çӑмарта тӑвасшӑн,
Кӑт-кӑт-кӑт-кӑтик!
Кӑт-кӑт-кӑт-кӑтик!

Ытисем чӑх пек çунат çапаççĕ.

Чӑпар чӑхӑ какалать,
Вĕттĕн-вĕттĕн уткалать.
Матти туса парас тет,
Пĕчĕк Марук çитĕр тет.

Пĕр ачи чăх евĕр уткаласа çӳрет.

Пĕчĕк Марук чăххине
Амăшĕпе тыр парать,
Кашни кунах ирхине
Чăпар чăхха йыхăрать.

Пĕр хĕрачи чăхсене апат панă пек туса кăтартать, ытти «чăххисем» апатне çиеççĕ.

М а р у к.
Чип-чип, чип-чип чăпаркка,
Кил хăвăртрах тырă çиме.
Ч ă х.
Кăт-кăт-кă-тик Марука
Туса патăм маттине.

«Чăххи» çăмарта тыттарать. Асанне ачасене тилĕ килни çинчен систерет.
Пурте «кашта çине» ларасшăн тăрăшаççĕ. Тилĕ çывхарса килет.

А с а н н е.
Тиллит-тиллит тилĕ тус,
Ăçта каян, тилĕ тус?
Т и л ĕ.
Васкап эпĕ ялалла,
Манăн чĕпсем тытмалла.
А с а н н е.
Ах, пĕлмен-çке халиччен
Эсĕ усал иккенне.
Кайса калăп сан çинчен
Хамăр касри вĕшлĕне.
Й ы т ă. Ав-ав-ав! Ав-ав-ав! (*Тилле хăваласа ярать.*)

Асанне ачасене автан мĕнле утнине, чăхсем мĕнле кăтикленине, тилĕ чеен утнине, йытă харсăр вĕрнине кăтартса пама сĕнет. Воспитателĕн тĕллевĕ: сюжета тăнлама вĕрентесси, кăмăл-туйăма çĕклентересси, калаçăва хутшăнтарасси.
Асанне ачасене «Чăпар чăхă» вăйă выляма чĕнет. Ушкăн варрине чăх калпакне тăхăннă ача тухать.

***«Чăпар чăхă» хускану вăййи.***
А с а н н е. Чăпар чăх, ăçта кайрăн?
А ч а. Шыв хĕрне (*утса çаврăнать*).
А с а н н е. Чăпар чăх, шыв хĕрне мĕншĕн кайрăн?
А ч а. Шыв ăсма (*икĕ витре йăтнă пек утса çаврăнать*).
А с а н н е. Чăпар чăх, сана шыв мĕн тума кирлĕ?

А ч а. Чĕппĕмсене ĕçтерме (*таканана шыв янă пек тăвать*).

Ачасем шыв ĕçнĕ пек тăваççĕ, кукленсе ларса апат çинĕ пек пӳрнисемпе урайне таккаççĕ, унтан пӳлĕм тăрăх сапаланса чупаççĕ.
Асанне ачасене хăналанма сĕтел хушшине чĕнет, пиçнĕ çăмартапа сайлать.

## *4-мĕш вăйă.* «Хĕвел ăçта çывăрать-ши?»

***Тĕллевсем:*** ачасене вăйă выляма хавхалантарасси; пĕр-пĕрин хушшинче килĕшсе рольсене пайласси; лăпкă тата васкавлă интонаципе каласса хусканасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** сăпка юрри валли теттесем (мулкач, чĕрĕп, упа).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасемпе чӳрече патне пырать, урамалла тимлĕн сăнаса пăхма сĕнет: çил вĕрнипе йывăç улçисем силленеççĕ, кайăксем вĕçеççĕ, машинăсем çӳреççĕ, çынсем хăйсен ĕçĕсемпе васкаççĕ. Хĕвел те çывăрмасть, пĕлĕт çийĕн кусса пырать, пурне те çутатать. Машина çӳренĕ сасăллă юрă илтĕнет.
Воспитатель ачасене урамри пек туйма хушать: аллисене сарса кайăк пек вĕçме, руль тытса машинăпа çӳреме, çулçăсем пек çаврăнса вĕçме.
Малалла воспитатель ачасенчен хĕвел каçхине мĕн туни çинчен ыйтать, мĕншĕн вăл тӳпере курăнмасть. Унтан вăл «Хĕвел ăçта çывăрать-ши?» юрă тăрăх сценка выляса кăтартать.

***«Хĕвел ăçта çывăрать-ши?» калаçу вăййи.***
М у л к а ч ç у р и. Хĕвел ăçта çывăрать-ши?
М у л к а ч а м ă ш ĕ. Асламăш вырăнĕ çинче.
М у л к а ч ç у р и. Асламăшĕ кам унăн?
М у л к а ч а м ă ш ĕ. Кăвак пĕлĕт.
М у л к а ч ç у р и. Мĕнпе вăл витĕнет?
М у л к а ч а м ă ш ĕ. Пысăк пĕлĕтпе.
М у л к а ч ç у р и. Кам ăна витет-ши?
М у л к а ч а м ă ш ĕ. Çил аслашшĕ.

Воспитатель малтан пуканепе выляса кăтартать, кайран ачасене упа, чĕрĕп ролĕсене сăнарлама хăнăхтарать. Мулкач çурине вăл сăпка юррипе çывăрттарать.

В о с п и т а т е л ь.
Паппине, нянине, нянине, паппине,
Çывăр, çывăр, лăпкă пул.
Ырă, ăшă тĕлĕк кур.
Ă-ă-ă-ă , ă-ă-ă-ă.

Ачасем воспитательпе пĕрле юрлаççĕ, теттесене ăшшăн çупăрлаççĕ.

## Юпа уйăхĕнче irttермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **«Йĕпе сукмаксем»**

***Тĕллевсем:*** кĕвĕ интонацине уйăрма вĕрентесси, килĕшӳллĕ туйăма çирĕплетесси; туйăма хусканура савăнăçлă тата хуйхăллă кăтартма вĕрентесси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** сунчăк, çумăра сăнламалли тĕксем (султанчиксем).

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене урамра сивĕтни çинчен, час-час çумăр çуни çинчен пĕлтерет, çавăнпа çумăрăн кăмăл-туйăмне сăнама хушать. Кĕрхи çумăр кĕвви илтĕнет (тĕслĕхрен, С. Майкапар, «Росинки»). Ачасем кĕвĕ хаваслă пулманнине тавçăраççĕ. Çакна воспитатель султанчиксемпе силлесе сăнарлама хушать. Воспитатель ачасене хĕвел тухрĕ тет, çумăр та савăнăçлă тет. Ачасем савăнăçлă çумăр кĕввине итлеççĕ (тĕслĕхрен, Д. Кабалевский, «Веселая сказочка»), вăйлă çусан чупаççĕ, чарăнсан – утаççĕ. Воспитатель пысăк сунчăкне уçса, ачасене çумăртан пытанма чĕнет. Пурте сунчăк айне пытанса шухă вăйă выляма пуçлаççĕ.

***«Çумăр йĕрет те кулать» вăйă.***

В о с п и т а т е л ь.

Пысăк ялăн çийĕнче
Пысăк пĕлĕт чарăнчĕ,
Унăн йывăр кутамккинчен
Çумăр пĕрчи сапăнчĕ.

Хаваслă кĕвĕ илтĕнет, воспитатель сунчăкне урайне хурать, ачасем «кӳлленчĕксем» урлă сикеççĕ.

Шăпăр-шăпăр юрласа,
Тăпăр-тăпăр ташласа
Ак пĕри çĕре сикет,
Ак теприйĕ сирпĕнет.
Шăппи-шаппи, пăтти-пат,
Çара ури çăтти-çат.

Ачасем сунчăк айĕнче утаççĕ, вĕçĕнче тенкелсем çине лараççĕ – «пӳрте» пытанаççĕ.

Йывăç тăрри, пӳрт тăрри,
Курăк тăрри, шыв тăрри,

Çумăр пĕрчипе пĕр харăс
Тăпăртатса-шăпăртатса
Çăтăлтатса юлтăр-и? *(С. Асамат «Çумăр ташши»)*

Ачасем « чӳречерен пăхаççĕ», пуçĕсемпе сулласçĕ.
Воспитатель ачасене çумăр ташшине кура хусканма сĕнет: хаваслăн е хуллен.
Унтан вĕсене икĕ шапа калаçăвне аса илме сĕнет; шапасем çумăр айĕнче пулма юратнине пĕтĕмлетет, («Шурлăхри шапасем» вăййа пăхмалла) вара юмахри шапасем çинчен калаçу йĕркелет. Воспитатель ачасемпе сасă вăййине иртерет, сасă юххин хăйне евĕрлĕ çеммине тимлеме сĕнет.

***«Шурлăхри шапасем» сасă вăййи.***

П ы с ă к ш а п а (*хулăн сасăпа*).
Çырмара концерт пуçланнă,
Дирижерĕ ват шапа.
Улăхĕ, кӳлли, вăрманĕ
Янăрать çĕршер саспа.
Кăвва-кăвва, па-ка-как!
Тăр-тăр-тăр!.. Ак-ак-ак!..

П ĕ ч ĕ к ш а п а: (*çинçе сасăпа*).
Пулăсем пуçне кăларнă,
Шăп лараççĕ кайăксем,
Куянсем те тимлĕн ларнă –
Киленеççĕ итлесе.
Сарă тилĕ, сăрă кашкăр,
Шурă юс, мăран упа…
Пурте килнĕ итлемешкĕн,
Пурте ăшшăн ал çупать.
Кăвва-кăвва, па-ка-как!
Тăр-тăр-тăр!.. Ак-ак-ак!.. *(Ю. Петров «Çырмари концерт»)*

П ы с ă к ш а п а.
Кăвва-кăвва, па-ка-как!
Тăр-тăр-тăр!.. Ак-ак-ак!..
П ĕ ч ĕ к ш а п а.
Кăвва-кăвва, па-ка-как!
Тăр-тăр-тăр!.. Ак-ак-ак!..

Вăййа 2–3 хутчен иртерме юрать; йĕркине ылмаштарса – ачасем пурте «шапасем», воспитатель – дирижер.

## *2-мӗш вӑййӑ.* **«Пахчи, пахчи»**

***Тӗллевсем:*** кӑмӑл-туйӑма аталантарасси; шухӑшласа кӑларма хистесси; юмах темине сӳтсе явма вӗрентесси.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** пахча ҫимӗҫ (помидор, купӑста, хӑяр).

В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель – кил хуҫи, ачасем патне купӑста йӑтса тухать, пурте сӑнаса пӑхаҫҫӗ. Кил хуҫи купӑстана мухтаса сӑвӑ вулать:

К и л х у ҫ и.

Касрӑм, касрӑм шурӑ ӑвӑс,
Турӑм лартрӑм шур карта.
Лартрӑм, лартрӑм купӑста,
Ӳссе ларчӗ купӑста.
Ак ҫапла шур пуҫлӑ,
Пурте пӗрле шӑварар,
Пӗрлех касса купалар.
Ах, пиччесем, инкесем,
Пырӑр, килӗр хӑнана,
Шур купӑста тутанма.

К и л х у ҫ и. Ачасем, купӑстаран яшка пӗҫереҫҫӗ-и?
А ч а с е м. Аха!
К и л х у ҫ и. Кукӑль пӗҫереҫҫӗ-и?
А ч а с е м. Аха!
К и л х у ҫ и. Шетникре тӑварлаҫҫӗ-и?
А ч а с е м. Аха!
К и л х у ҫ и. Ҫиме юрататӑр-и?
А ч а с е м. Аха!
К и л х у ҫ и. Качакана паратпӑр-и?
А ч а с е м. Паратпӑр.
К и л х у ҫ и. Мулкачсене хӑналатпӑр-и?
А ч а с е м. Хӑналатпӑр.

Воспитатель ачасене вӑййӑ картине тӑратать, пӗр ачи мулкач пулать.
«Мулкач» карта вӑййи.
Ачасем карталанса утаҫҫӗ. Мулкач варринче тӑрать.

А ч а с е м.

Тӗмеске те тунката
Нимӗн те мар мулкача.

М у л к а ч.

Карта урлă ялт сиксе
Кĕрсе каяп пахчана.

А ч а с е м.

Пахча тулли купăста
Тĕлĕнтерет мулкача.
Купăстийĕн пуçĕсем
Шап-шурă та сарлака.

М у л к а ч.

Хăшне çыртса пăхам-ши?
Хăшне татса каям-ши? *(Н. Ваçанкка «Мулкач»)*

Воспитатель ачасене сĕтел патне чĕнет, унта пахча çимĕç выртать: кишĕр, сухан, купăста, тăрăхла кавăн, хăяр, помидор. Унтан вĕсен ячĕсене ыйтать, вара тенкелсем çине ларса юмах итлеме сĕнет.

**Пахча çимĕç**

(*Юмах*)

Пĕррехинче пахча çимĕçсем тавлашса кайнă: кам-ши вĕсенчен чи хитри. Купăста мухтанать: «Эпĕ шурă, кăчăртататăп. Эпĕ пуринчен те хитре». Унтан хăяр калать: «Эпĕ симĕс те пит çирĕп. Эпĕ чи хитри». Помидор çилленсе: «Çук, эпĕ чи хитри, мĕншĕн тесен эп – хĕрли». Пахча çимĕçсем чылайччен тавлашрĕç. Часах пахчана мулкач чупса килчĕ. Вăл купăстана курчĕ те калать: «Купăста – чи тутли те чи хитри». Вăл кучанне тытрĕ те – чăн та çавăн пек. Унтан Коля чупса килчĕ, хăяра курса вăл каларĕ: «Мĕнле хитре хăяр, çисе пăхмалла!» Илчĕ те тарчĕ. Каярахпа анне килчĕ, ăна помидор килĕшрĕ: «Мĕнле хитрескер!» Салат тумашкăн ăна татса илсе кайрĕ. Çакăнтанпа пахча çимĕçсем тавлашма пăрахрĕç, мĕншĕн тесен вĕсем пурне те килĕшрĕç. Юмах та вĕçленчĕ.

Воспитатель «юмах килĕшрĕ-и» тесе пахча çимĕçсене сĕтел çине хăварать, ачасене хăйсем тĕллĕн юмаха выляма хавхалантарать.

## *3-мĕш вăйă.* «Çил ачисем»

***Тĕллевсем:*** тимлĕхе, ăсласа сăнарланине аталантарасси; сасă юххин хăйне евĕрлĕ çеммине, тĕрлĕ хусканусем шухăшласа кăларасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** кĕрхи çулçăсем.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене карталанса ларма сĕнет, вĕренмелли хăнăхтару ирттерет.

***«Çил ачисем» вĕренӳ хăнăхтарăвĕ.***

В о с п и т а т е л ь (*çиллессĕн*). Çилленсе çил вĕрет: «У-у-у, у-у-у…».

А ч а с е м. У-у-у, у-у-у…

В о с п и т а т е л ь. Хыттăн вăл мĕрьерен улать: «У-у-у, у-у-у…»

А ч а с е м. У-у-у, у-у-у…

В о с п и т а т е л ь *(шăппăн, вăрттăн)*. Килте ларăр, килте… У-у-у, у-у-у…

А ч а с е м. У-у-у, у-у-у…

В о с п и т а т е л ь *(вăйлăн)*. Ниçта та ан тухăр. У-у-у, у-у-у…

А ч а с е м. У-у-у, у-у-у…

Воспитатель ачасене «парка уçăлса çӳреме» чĕнет. Ачасем йывăççем пулаççĕ, хускану вăййи выляççĕ.

***«Паркри йывăççем» хускану вăййи.***

В о с п и т а т е л ь:

Пĕр каç кӳлĕм çил ачи
Чупма тухрĕ катаччи.
Тухрĕ те вăл çул çине
Вирхĕнчĕ вăрман енне.

Ачасем – «йывăççем», аллисене – «туратсене» суллаççĕ.

Шăхăрать хăй ши! те ши!
Ун пек вичкĕнни пур-ши?

Ачасем малалла ӳпĕнеççĕ, унтан аялалла, аллисемпе енчен енне суллаççĕ.

Пĕтĕрнет те çаврăнать,
Йывăççене çапăнать. (*В. Харитонов «Çил ачисем»)*

Ачасем аллисене малалла тăсаççĕ, ал лаппипе сулласçĕ – çулçăсем çилпе «шĕпĕлтетеççĕ».
Воспитатель ачасене кĕрхи çулçă кăтартать. Музыка сассипе çулçăна çӳлелле ывăтать, ачасем сăнаççĕ. Вара, çулçă тăкăннине сăнласа, ачасем ташлаççĕ.

## *4-мĕш вăйă.* **« Юрлакан пĕчĕк арча»**

***Тĕллевсем:*** ачасене çĕнĕ юмахпа паллаштарасси; темă тăрăх калаçăва хутшăнтарасси тата ĕçсем çивĕчленнине сăнлама хăнăхтарасси; тимлĕн итлесе, юмахри сăнарсене хăш кĕвĕ çывăхраххине уйăрма вĕрентесси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** шăхличĕ, юрлакан арча.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель асанне тумне тăхăннă, асамлă шкатулка йăтса кĕрет, хупкăчне уçать те, унтан илемлĕ кĕвĕ илтĕнет.

А с а н н е. Асанне пурӑннӑ. Асаннен кивӗ арча пулнӑ. Асаннен кивӗ арчинче кивелме пӗлмен Ҫӑмха пулнӑ. Ватӑ асанне пӗррехинче арчине пӑлхатма тытӑнать. Ҫав вӑхӑтра арчара выртакан асамлӑ Ҫӑмха урайне ӳкет. Урайне тухса ӳксенех ҫав Ҫӑмхана чун кӗрет. *(Н. Ытарай «Ҫӑмха» юмах).*

Ачасем юрлакан арча тавра лараҫҫӗ, кӗвӗ майӑн воспитатель ҫӗнӗ юмах калама пуҫлать.

**Шӑхличӗ**

*(Арчари юмах)*

Пурӑннӑ тет пӗр кӗтӳҫ, унӑн шӑхличӗ пулнӑ тет. Шӑхличӗпе вӑл савӑнӑҫлӑ юрӑ юрласа, ир-ирех хӑйӗн кӗтӗвне хире хӑваланӑ. (*Савӑнӑҫлӑ кӗвӗ илтӗнет.*) Кунӗпе кӗтӳ ҫаран ҫинче ҫӳрет. Кӗтӳҫ, сулхӑнра тӗмсем хыҫӗнче канса выртса, шӑхличӗ калать. Ӗнесем шӑхлич сассине илтсен лӑпкӑ тӑнӑ, вӗсем кӗтӳҫӗ ҫумра пулнине туйнӑ. *(Лӑпкӑ кӗвӗ илтӗнет.)*

Пӗррехинче кӗтӳҫ хӗвел ҫинче хӗртӗнсе ывӑннӑ та ҫывӑрса кайнӑ. Ӗнесем шӑхличӗ сассине илтменнипе ҫаран тӑрӑх сапаланса кайнӑ. Машка ятлӑ ӗне вӑрмана кӗрсе кайса унти курӑка ҫинӗ. Мишка ятлӑ вӑкӑр ҫырма хӗррине пӗччен чупса кайнӑ. Ытти ӗнесем те пӗр-пӗринчен аяккалла сапаланнӑ. Кӗтӳҫ ҫаплах ҫывӑрнӑ.

Кӗтӳ саланса кайнине кайӑксем курнӑ та пӑшӑрханса чӗвӗлтетме пуҫланӑ: «Пӑхӑр-ха, пӑхӑр, чӗвӗл-чӗвӗл, кӗтӳҫ ҫывӑрса кайнӑ. Халӗ унӑн ӗнисем инҫете кайса ҫухалаҫҫӗ. Ӗнисене кӗтӳҫ пуҫтарса пӗтерейместь». (*Кайӑксем чӗвӗлтетнӗ сасӑ илтӗнет.*) Ӗне макӑрнӑ сасӑ та илтӗнми пулчӗ, вӗсем вӑрмана шалтан шала кӗреҫҫӗ.

Кӗтӳҫ пуҫӗ тӑрринче кайӑксем вӗҫме пуҫларӗҫ, чӗвӗлтетсе вӑратаҫҫӗ. (*Кайӑксем пӑшӑрханса чӗвӗлтетнӗ сасӑ илтӗнет.*) Вӑл вӑранчӗ, куҫне сӑтӑрса шӑлчӗ. Пӑхать, ҫаран ҫинче пӗр ӗне те ҫук. Хӑранипе ӗнисене чӗнсе кӑшкӑрма пуҫларӗ: «Эй, ӗнесем! Эй, вӑкӑрсем! Килӗр халӗ каялла!» Ӗнесем питӗ инҫете кайнипе кӗтӳҫе илтмерӗҫ. Хуйхӑрнипе вӑл хӑйӗн шӑхличӗ ҫинчен аса илчӗ: «Пулӑшсам мана шӑхлич!» Кӗтӳҫ шӑхличӗ калама пуҫларӗ. Тунсӑхлӑ кӗвӗ вӑрман тӑрӑх саланчӗ, унта кӗтӳҫ хуйхӑрни сисӗнчӗ. (*Хурлӑхлӑ кӗвӗ илтӗнет.*) Ҫак кӗвӗ инҫетри ялсене те саланчӗ, вӗсен ӗнисем: «Му-у!» кӑшкӑрчӗҫ. Вӑрманти ӗнесем те шӑхличӗ сассине илтрӗҫ. Машка хаваслӑн муклатрӗ: «Му-у-у!», паллануӑ сасӑ енне сӑмсипе туртӑнчӗ. Ӑна хирӗҫ Мишка вӑкӑр мӗкӗрчӗ: «Му-у-у!» Пур ӗне те пӗр харӑс кӗтӳҫ патне ҫараналла утрӗ. Ӗнесем таврӑннипе кӗтӳҫ савӑнчӗ, вӗсене пыра-пыра ачашларӗ: «Маттурсем, тупӑнтӑр!». Каҫпа кӗтӳҫ хӑйӗн ӗнисене яла илсе таврӑнчӗ. Хаваслӑ кайӑксем кӗтӳҫ тавра ҫаврӑнчӗҫ, шӑх-

личпе пӗрле юрларӗҫ. (*Хаваслӑ кӗвӗ сасси илтӗнет.*) Ҫапла вара, шӑхличӗ кӗтӳҫе ӗнесене тупма пулӑшрӗ.

*Асӑрхаттарни.* Воспитатель ӗҫе урӑхла та йӗркелеме пултарать.

* Вӗҫӗнче юмах килӗшнипе килӗшменни ҫинчен ыйтмалла, текст тӑрӑх калаҫу йӗркелемелле.

* Юмаха кӗске кӗвӗ татӑкӗпе пӗрле вулассине йӗркелесси; текст тӑрӑх калаҫу йӗркелесси.

* Ачасене тӗрлӗ сӑнарсемпе тухса калаҫма (кӗтӳҫ, ӗнесем, кайӑксем) тата ӗҫсем ҫивӗчленнине сӑнлама хӑнӑхтарасси.

Асанне тумне тӑхӑннӑ воспитатель каллех асамлӑ арча патне пӗшкӗнет.

А с а н н е. Ах, инкек – ҫавра Ҫӑмха сӳтӗлсе вӗҫне тухнӑ иккен. *(Ҫӑмха каялла ҫӑмхаланса ватӑ асаннен кивӗ арчине кӗрсе выртать.)*

Арчара выртать Ҫӑмха –
Халь вӗҫлем-ха юмаха. (*Н. Ытарай. «Ҫӑмха» юмах)*

## Чӳк уйӑхӗнче ирттермелли вӗрентӳллӗ вӑйӑсем

### *1-мӗш вӑйӑ.* **«Маттур ҫӗвӗҫсем»**

***Тӗллевсем:*** ачасене вӑййа хутшӑнма хавхалантарасси тата хӑйсем тӗллӗн сӑнара калӑплас туйӑма аталантарасси; пӗр сӑнара тӗрлӗ тӗслӗ кӑтартса парасси.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** ҫӗвӗҫ хатӗрӗсем (йӗпсем, хачӑ, виҫмелли хӑю тата ытти те).

В ӑ й ӑ  ю х ӑ м ӗ

Пӳлӗме воспитатель Пинерпи ятлӑ пуканене йӑтса кӗрет, унӑн кӗпи ҫурӑлнӑ. Воспитатель ачасенчен пулӑшу ыйтать. Хӑш ачасем хӑйсен шухӑшне калаҫҫӗ, ҫавсенчен вылякан ушкӑн та йӗркеленет. Малтанах ҫӗвӗ ҫӗлекен мастерской «уҫмалла». Хӑш-пӗр ачасем хӑйсен пуканисемпе унта пыраҫҫӗ, теприсем ҫӗвӗ ӑстисем пулаҫҫӗ. Воспитатель ачасене хӑйсем тӗллӗн выляма сӗнет: сӗтел ҫинче пусма татӑкӗсем, ҫӗвӗҫ хатӗрӗсем выртаҫҫӗ (йӗпсем, хачӑсем); унтан пурне те «Ҫӗвӗ мастерскойӗ» ятлӑ вӑйӑ выляма чӗнет.

Й ы ш ӑ н а к а н (воспитатель).

Пукане валли ҫӗлерӗм ҫӗн саппун,
Аркине те эрешлерӗм, пит маттур!
Кив теттесене юсарӑм:
Халь упан та пусӗ пур,
Мулкача ҫуса тасатрӑм, пит маттур!

*(Д. Гордеев «Тытса юрат»)*

Килӗр, килӗр, ҫӗвӗҫ патне пурте килӗр! Кам пӗрремӗш пулӗ?

Ачасем хӑйсен пуканисемпе пырса тӑраҫҫӗ.
Воспитатель Маринерен ачи мӗн ятлине ыйтса пӗлет.

М а р и н е. Лисук.
Й ы ш ӑ н а к а н. Мӗн ҫӗлемелле?
М а р и н е. Кӗпе.
Й ы ш ӑ н а к а н. Пусмине суйла. Сарӑ е симӗс чечеклӗ татӑк килӗшет?
М а р и н е. Симӗс чечекли.
Й ы ш ӑ н а к а н. Сирӗн кӗпе кӗҫнерни куна хатӗр пулать, квитанцине илӗр. Тепри кӗрӗр-ха!

Ачасем пĕр-пĕрин хыççăн кĕпе çĕлеттерме параççĕ. Воспитатель, хăйĕн апат вăхăчĕ çитнине пĕлтерсе, кама та пулин ăна ылмаштарма ыйтать. Тăрăшуллисем йышăнакан пулса пăхаççĕ. Айккинчи ачасене воспитатель çĕвĕç пулма мастерскойне чĕнет.

Çĕвĕçсем аллине хачă тата йĕп тытса пăхççĕ, хатĕр кĕпесене пуканесене тăхăнтартаççĕ. «Ашшĕ-амăшĕсем» çĕвĕçсене тав тăваççĕ, пуканесемпе уçăлма тухаççĕ.

Воспитатель пукане кĕписенчен выставка йĕркелеме сĕнет. Унта хатĕр пукане кĕписене тăратма пулать, ачасем хутран хатĕрленĕ ўкерчĕксем тата тĕрлĕ пусмаран каснă пукане тумтирĕн пайĕсем те пулма пултараççĕ.

## *2-мĕш вăйă.* «Ача-пăча лаввккинче»

***Тĕллевсем:*** ачасене сюжетлă тата пĕлтерĕшлĕ вăйăсене выляма хутшăнтарасси; теттесемпе тата пĕр-пĕрин хушшинче юлташла хутшăнусем йĕркелеме вĕрентесси; пĕлтерĕшлĕ сăнара кăтартса пама хăнăхтарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** пўске, пукане, кĕтўç тата ытти теттесем.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене лавккана чĕнет, унта теттесем сутаççĕ. Кашни ача хăйне килĕшекен тетте туянма пултарать. Воспитатель сутуçă пулать, ачасем – тавар туянакансем. «Сутуçă» ачасене тетте сĕнет, ăна вĕсем тытса пăхма пултараççĕ; тата мĕнле теттесем пурри çинчен пĕлтерет: пукане, упа, автобус, пўске тата ытти те. Воспитатель сĕннипе ачасем сутуçă пулса выляççĕ. Вылянă май ачасем çĕнĕ сăвă веренсе лайăх тавара мухтама хăнăхаççĕ.

**Теттесем**

Пĕчĕк Петĕр тантăшне
Вăйă выляма чĕнет:
– Кил, – тет, – Сантăр, выляма,
Манăн теттесем нумай.
Ку – ĕне, вăл сĕт парать,
Му! тесе вăл макăрать.
Акă кукăр мăйрака –
Сĕкĕшме ăста така.
Кăвакал, автан та хур,
Йытăпа кушак та пур.
Ку – машина, ун çине
Эп тиеп теттесене.
Турттаратăп алăкран
Пуçласа тĕпел таран.

Лаша çеç ларасшăн мар,
Эсĕ, тет, хама чуптар.
Ку ак самолет, хитре
Ярăнать вăл пĕлĕтре.
Ку шăхличĕ, шăхăрать,
Шăхăртса пăх, ан хăра…
Пĕчĕк ачасем валли
Тем те пур вылямалли. *(Уйăп Мишши)*

Воспитатель ачасене хăйсене килĕшнĕ тетесемпе выляма сĕнет.
Унтан суйланă теттене сăнласа, мĕнле утнине, мĕкĕрнине, машина çӳренине, мулкач сикнине кăтартса пама хушать.
Воспитатель сентре çинчен кĕтӳç теттене илет, пурте пĕрле юмахне аса илеççĕ, выляма хатĕрленеççĕ. Вара пĕрне шăхличĕ парать, вăл кĕтӳçĕ пулать, теприсене Машка ĕнепе Мишка вăкăра, ыттисене – кайăксене сăнлама хушать.
Юмаха сăнарласа выляма кĕвĕпе усă курмалла.

***«Кĕтӳçпе ĕнесем» вăййă.***

В о с п и т а т е л ь.
Митюк тухрĕ урама,
Хăй шăхличĕ шăхăртать.
К ĕ т ӳ ç (*шăхличпе выляса*). Тӳрӳ-тӳрӳ! Ти-ти-ти!
В о с п и т а т е л ь. Хăй шăхличĕ шăхăртать.
Ĕ н е.
Мук! Мук! Му-ук!
Алăк уç, Митюк!
Илсе килтĕм сан валли
Ăшă сĕт витре тулли.
В о с п и т а т е л ь.
Митюк тухрĕ урама.
Хăй шăхличĕ шăхăртать.
К ĕ т ӳ ç. Тӳрӳ-тӳрӳ! Ти-ти-ти!
В о с п и т а т е л ь. Тӳрӳ-тӳрӳ! Ти-ти-ти!
Ĕ н е.
Му-ук, му-ук!
Мана илме хирĕç тух!
Хирте шăрăх пулнипе
Ĕçес килет кунĕпе.
*(В. Бараев «Митюк», А. Ильин «Ĕне муклатать»,*
*М. Волкова «Ырă ĕне»).*

Воспитатель ача-пăча лавкки хупăнать тесе пĕлтерет. Ачасем хăйсене килĕшнĕ тет-тесене выляма илме пултараççĕ.

## *3-мĕш вăййă.* **«Ме-кек качака»**

***Тĕллевсем:*** ачасене театрпа тата унăн тытăмĕпе паллаштарасси; спектакль илемĕпе кăмăл-туйăма çĕклентерессе, выляма хавхалантарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** пукане театрĕн хатĕр-хĕтĕрĕсем.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель аллине театра каймалли билетсем тытса: «Мĕн вăл театр?» – тесе ыйтать. Ачасен хуравĕсене итлесе вăл театр çинчен калаçу пуçлать. «Театрта ачасем тата аслисем валли спектакльсем выляççĕ», – тесе пĕлтерет воспитатель. «Çавăн пекех театр вăл пысăк çурт, унта пӳлĕмсем нумай тата спектакль пăхакансен залĕ пур. Куракансене лармалли тенкелсем меллĕ, спектакле вылямалли сцена та аслă», – тет воспитатель. Артистсем вылянине курма килекесем малтан кассăра билет илни, çиелти тумтирĕсене уйрăм çакмалли вырăна хывса хурса шăнкăрав сассине кĕтни çинчен те каласа парать: «Пĕрремĕш шăнкăрав сассипе куракансен пӳлĕмне кĕме юрать. Куракансем тенкелсем çине лараççĕ те спектакль пуçланса чаршав уçăласса кĕтеççĕ. Акă юлашки шăнкăрав сасси илтĕнет, вара юрă-кĕвĕ янраса чаршав уçăлать, куракансем сцена çинче ятарласа тунă япаласене кураççĕ. Актерсем тухаççĕ, спектакль пуçланать. Питĕ тăрăшса выляса актерсем куракансене тыткăнлаççĕ. Куракансем пĕр-пĕринпе калаçмаççĕ, тимлĕ лараççĕ, артистсене алă çупса хавхалантараççĕ. Спектакль вĕçленсен актерсем пуç тайма тухаççĕ, куракансем вĕсене тăваллăн алă çупса тата чечек парнелесе тав тăваççĕ».

*Асăрхаттарни.* Воспитатель ачасене театр çинчен чи кирлине çеç калать, нумай сăмахласа ачасене ывăнтармасть. Ачасене ăнланмалла пултăр тесе воспитатель ӳкерчĕксемпе, тĕрлĕ слайдсемпе тата сăн ӳкерчĕксемпе усă курать. Калаçăвăн иккĕмĕш пайĕнче пĕр-пĕр актер çинчен каласа пама пулать.

Воспитатель ачасем патне пукане театрĕ килни çинчен пĕлтĕрет, вĕсем спектакль выляса параççĕ тет (тĕслĕхрен, Л. Толстой çырнă «Ме-кек качака» юмаха, чăвашла И. Тукташ куçарнă). Ачасем билетсем илеççĕ, театрти пек лартса тухнă тенкелсем çине вырнаçаççĕ те шăнкăрав сасси пуласса кĕтеççĕ. Ширма çинчи чаршав уçăлать, пукане спектаклĕ пуçланать. Унтан аслă ушкăнри ачасемпе воспитатель юмах выляма пуçлаççĕ.

***Алла тăхăнмалли пуканесемпе вылямалли «Мек-ек качака» спектакль.***

«Кăчăр-качăр качака» ача-пăча юрри илтĕнет.

Е р т с е  п ы р а к а н. Пĕр карчăкпа пĕр старик пурăннă тет. Вĕсен Машук ятлă хĕр ача пулнă. Пĕрре çак хĕр качакасем кĕтме каять. Вăрманта, хирте, улăхра, варсенче çитерсе çӳрет ку качакасене. Çитерет-çитерет те каçхине киле хăваласа килет. Старикки кĕтӳ ярсанах алкум вĕçне тухса тăрса качакасенчен çапла ыйтать:

Асаттепе качакасем тухса тăраççĕ.

А с а т т е (*ҫепĕҫҫĕн*).

Каччăм-каччăм, каччăмсем,
Качуралла шăллăмсем,
Мăйракаллă йăмăксем,
Кăмăл тулчĕ-и паян?
Хăналантăр-и самай?
Ĕҫсе ҫирĕр-и пĕрмай?

К а ч а к а с е м.

Мекекек, мекекек!
Эпир тутă тем пекех,
Хăналантăмăр самай,
Ĕҫсе ҫирĕмĕр пĕрмай:
Улăх тăрăх ҫӳресе
Улăх ути иртрĕмĕр,
Вар-вар тăрăх ҫӳресе
Ҫăлкуҫ шывне ĕҫрĕмĕр,
Сĕм вăрманта ҫӳресе
Ăвăс ҫулҫи пухрăмăр,
Хурăнлăхра ҫӳресе
Хурăн ҫулҫи ҫирĕмĕр.

Е р т с е  п ы р а к а н. Пĕр куштан качакин кăна кăмăлĕ тулман иккен. Ытхальтен шăртланса вăл старике ҫапла хуравлать.

К у ш т а н  к а ч а к а (*тарăхса*).

Мекекек, мекекек!
Эпĕ выҫă тем пекех.
Хырăм выҫă, ыратать,
Чăрăш тăрри пек чăрлать.
Улăх тăрăх ҫӳресе
Улăх ути курмарăм,
Вар-вар тăрăх ҫӳресе
Тăрă ҫăлкуҫ тупмарăм,
Вăрман тăрăх ҫӳресе
Ăвăс ҫулҫи ҫимерĕм,
Хурăнлăхра ҫӳресе
Хурăн ҫырли пухмарăм.
Сухăр вĕлтрен ҫулҫи ҫеҫ
Татса ҫирĕм ҫурмаран,
Шăршлă тислĕк шывĕ ҫеҫ
Тупса ĕҫрĕм ҫырмаран.

Е р т с е   п ы р а к а н. Çак юрра илтсен старик хӑй хӗрне çав тери çилленсе кайрӗ.

А с а т т е. Килтен тухса кай!

Пурте тухаççӗ.

Е р т с е   п ы р а к а н. Тепӗр кунне качакасем кӗтме карчӑкӗ тухса кайрӗ. Вӑрманта, хирте, варсенче çитерсе çӳрерӗ вӑл качакисене. Çитерчӗ-çитерчӗ те каçхине киле хӑваласа килчӗ. Старик каллех алкум вӗçне тухса тӑнӑ.

А с а т т е (*тухать*).

Каччӑм-каччӑм, каччӑмсем,
Качуралла шӑллӑмсем.
Мӑйракаллӑ йӑмӑксем,
Кӑмӑл тулчӗ-и паян,
Хӑналантӑр-и пӗрмай,
Ӗçсе çирӗр-и пӗрмай?

К а ч а к а с е м (*харӑссӑн*).

Ме-ке-кек, ме-ке-кек!
Эпир тутӑ тем пекех,
Хӑналантӑмӑр самай,
Ӗçсе çирӗмӗр пӗрмай:
Улӑх тӑрӑх çӳресе
Улӑх ути иртрӗмӗр,
Вар-вар тӑрӑх çӳресе
Çӑлкуç шывӗ ӗçрӗмӗр,
Сӗм вӑрманта çӳресе
Ӑвӑс çулçи пухрӑмӑр,
Хурӑнлӑхра çӳресе
Хурӑн çырли çирӗмӗр.

К у ш т а н   к а ч а к а (*тарӑхса*).

Ме-ке-кек, ме-ке-кек!
Эпӗ выçӑ тем пекех.
Хырӑм выçӑ, ыратать,
Чӑрӑш тӑрри пек чӑрлать.
Улӑх тӑрӑх çӳресе
Улӑх ути курмарӑм,
Вар-вар тӑрӑх çӳресе
Тӑрӑ çӑлкуç тупмарӑм,
Вӑрман тӑрӑх çӳресе
Ӑвӑс çулçи çимерӗм.

Хурăнлăхра çӳресе
Хурăн çырли пухмарăм.
Сухăр вĕлтрен çулçи çеç
Татса çирĕм çурмаран,
Шăршлă тислĕк шывĕ çеç
Тупса ĕçрĕм çырмаран.

Е р т с е  п ы р а к а н. Малтанхинчен те хытăрах тарăхса кайрĕ старик çак юрра илтсен.

А с а т т е (*çилленсе*). Карчăк, тухса кай килтен.

Асанне тухса каять.

Е р т с е  п ы р а к а н: Тепĕр кунне старик хăй тухса кайрĕ качакасене кĕтме. Вăрманта, хирте, улăхра, варсенче çитерсе çӳрерĕ качакисене. Çитерчĕ-çитерчĕ те каçхине киле хăваласа килчĕ. Хăй маларах крыльца çине улăхса тăчĕ те çапла ыйтать.

А с а т т е (çепĕççĕн).

Каччăм-каччăм, каччăмсем,
Качураллă шăллăмсем,
Мăйракаллă йăмăксем,
Кăмăл тулчĕ-и паян?
Хăналантăр-и самай?
Ĕçсе çирĕр-и пĕрмай?

К а ч а к а с е м (*харăссăн*).

Ме-ке-кек, ме-ке-кек,
Эпир тутă тем пекех:
Хăналантăмăр самай,
Ĕçсе çирĕмĕр пĕрмай.
Улăх тăрăх çӳресе
Улăх ути иртрĕмĕр,
Вар-вар тăрăх çӳресе
Çăлкуç шывĕ ĕçрĕмĕр,
Сĕм вăрманта çӳресе
Ăвăс çулçи пухрăмăр,
Хурăнлăхра çӳресе
Хурăн çырли çирĕмĕр.

К у ш т а н  к а ч а к а *(пуçне тăратса*).

Мекекек, мекекек!
Эпĕ выçă тем пекех.
Хырăм выçă, ыратать,
Чăрăш тарри пек чăрлатать.

Улăх тăрăх çӳресе
Улăх ути курмарăм,
Вар-вар тăрăх çӳресе
Тăрă çăлкуç тупмарăм,
Вăрман тăрăх çӳресе
Ăвăс çулçи çимерĕм,
Хурăнлăхра çӳресе
Хурăн çырли пухмарăм.
Сухăр вĕлтрен çулçи çеç
Татса çирĕм çурмаран,
Шăршлă тислĕк шывĕ çеç
Тупса ĕçрĕм çырмаран.

Е р т с е   п ы р а к а н. Çак юрра итленĕ хыççăн старик тытрĕ те куштан качакана кăкарса хучĕ.

А с а т т е (*питĕ çилленсе*). Эх, ултавçă! (*Патак илсе качакана çапма пуçлать.*) Ак, кăтартап сана – «Шăршлă тислĕк шывĕ»!

Е р т с е   п ы р а к а н. Курать качака – ĕç начар. Пĕтĕм вăйне пухса карт туртса татрĕ те вĕрене унтан яра пачĕ ăçта куç курнă çавăнталла.

Чупса каяççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н. Куштан качака чупрĕ-чупрĕ те куян çуртне вĕçтерсе çитрĕ, кĕрсе кайрĕ. Акă выртать хайхи кăмака çинче. Куянĕ нимĕн те пĕлмен, – вăл пахчара купăста çинĕ.

М у л к а ч  (*çисе тăрансан  юрă юрлать*).

Сăрă мулкач пит çăвать,
Хăнана пуçтарăнать:
Сăмсине çурĕ, тяппине çурĕ,
Хăлхисене çурĕ,
Тяппине шăлса типĕтрĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н. Куянĕ хăй килне таврăнчĕ. Пăхать – ун кăмаки çинче сухаллă старик вырта парать.

М у л к а ч. Кам выртать ман кăмака çинче?

К у ш т а н   к а ч а к а (*кăмака çинчен çиллес сасăпа*).

Эпĕ куштан качака,
Виçĕ пуса илнĕскер,
Аяк тирне сӳнĕскер.
Тяп-тяп тăвап тяппăмпа,
Тăрăс тапăп урапа.
Чĕтрентерĕп сухала –

Сикĕп тухăп сан умна,
Тĕкĕп çурăп хырăмна!

М у л к а ч (*хăраса*). Ай-ай-ай! (*Тĕмсем хыçне пытанать, йĕрет.*)

Е р т с е п ы р а к а н. Саркаланса автан килет: урисене сăран атă тăхăннă, ик хăлхине ылтăн алкасем çакнă, кукăр çавине хулпуççи çине çавăрса хунă.

А в т а н. Сывă-и, куян тус? Мĕншĕн куççуль юхтаран?

М у л к а ч: Манăн епле макăрас мар? Ме-кек качака килтен хăваласа кăларса ячĕ мана.

А в т а н. Каяр иксĕмĕр пĕрле. Эп сана пулăшăп!

Е р т с е п ы р а к а н. Авă вĕсем куян пўрчĕ патне çитрĕç. Шан-шан-шан! шаккарĕ сар автан алăкран.

А в т а н.

Хуçи пур-и, майри пур-и?
Кам пурăнать ку пўртре?

К у ш т а н к а ч а ка.

Эпĕ куштан качака,
Виçĕ пуса илнĕскер,
Аяк тирне сўнĕскер,
Тяп-тяп тăвăп тяппăмпа,
Тăрăс тапăп урапа.
Чĕтрентерĕп сухала –
Сикĕп тухăп сан умна,
Тĕкĕп çурăп хырăмна!

Е р т с е п ы р а к а н. Автан нимĕн чухлĕ те хăраса ўкмерĕ. Пĕррех сик-се ларчĕ те вăл алăк сулли çине хаяр сасăпа юрлама пуçларĕ:

А в т а н.

Ки-ки-ри-кук сар автан
Паттăр салтак авалтан!
Манăн хĕçĕм çап-çутах,
Хураллатăп кил-çурта.
Тухнă пултăр хăвăртрах!

Е р т с е п ы р а к а н. Куштан качака хăранипе кăмака çинчен – сĕтел çине, сĕтел çинчен – урайне, урайĕнчен – алăк патне, унтан тара пачĕ вăр-маналла. Автанпа куян халь те пулин килĕнче пурăнаççĕ.

Мулкачпа автан юрă юрлаççĕ.

А в т а н. Çеремлĕхре мулкачă сиккелет:

М у л к а ч. Çиес килет кулачă! – текелет.

А в т а н. Сăмахлама мулкачă пит ăста:

М у л к а ч. Уншăн кăпăш кулачă – купăста. *(Н. Ытарай, «Мулкачă»)*

Вĕçĕнче воспитатель ачасене алă çупма хавхалантарать, юмах килĕшрĕ-и тесе ыйтать.
*Асăрхаттарни.* Юмах çинчен тĕплĕнрех ачасемпе çитес тĕл пулура сӳтсе явма пулать.

## *4-мĕш вăйă.* **«Пĕрремĕш юр»**

***Тĕллевсем:*** ыйтăва татса пама явăçтарасси; ăсра сăнарланине аталантарасси; пĕччен е ушкăнпа выляна чух хастарлăха кăтартасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** кушак (тетте), кăмака, чӳлмекпе пăтă тата пĕремĕксем.

В ă й ă ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, урамра кунран-кун сивĕтнине асăрхарăр-и? Майĕпен хĕл çитет, ирсерен кӳлленчĕксем пăрланаççĕ.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр шурă юр –
Тĕрлĕ-тĕрлĕ илем пур!
Васкăр, ачасем, пурте урама.
Илĕр йĕлтĕрсем, тухăр урама! (*Кушак теттене алла илет.*)
Вăш-вăш, вăш-вăш, ай, çил вĕрет,
Каш-каш, каш-каш вăрман кашлать.
Шур сухаллă Хĕл мучийĕ
Питрен-куçран, ай, хыпашлать.
Ачасем, кушака мĕнле пулăшма пулать-ши?

Ачасем хăйсен шухăшне калаççĕ: çăм атă тăхăнмалла, пӳртрен тухмалла мар, кăмака çинче ă♂шăнмалла тата ытти те. Воспитатель кушака ăшăнмашкăн кăмака çине лартать, пӳртре лайăх тесе пĕлтерет (ăшă, пăтă пиçнĕ, сĕтел çинче пĕремĕксем), унтан ачасемпе вăйă выляççĕ.

***«Кăмака çинчи кушак» вăйă.***

Ачасем карталанса утаççĕ. Варринчи ача – кушак, ун тавра çаврăнаканнисем – шăшисем.

В о с п и т а т е л ь.

И çил-тăман, çил-тăман
Кăлтăрмач пек çаврăнать, çаврăнать,
Алла-аллăн тытăнар та
Кăлтăрмач пек çаврăнар.
Ак çапла!

*(«Çил-тăман» юрăран, сăвви В. Алакерăн,*
*кĕвви В. Воробьевăн.*
*«Чăваш музыки ача садĕнче» кĕнекерен)*

Ачасем чарăнаççĕ.

К у ш а к (*пăтă пĕçернĕ евĕр пăтратнă пек туса*).

Пăри пĕрчи акрăр-и?
Пăри пăтти çакрăр-и?
Сарă çуне сапрăр-и?
Мана çиме лартрăр-и?

(*Ача-пăча самахлахĕнчи чĕнӳ-йыхрав юрри*)

А ч а се м (*ачасем тăпăртатса шалалла кĕреççĕ, тухаççĕ*).

Мяу, мяу хăй кăна
Мансăрах хăйма çиет.
Кун пек тутлă хăймана
Манăн та çиес килет. (*Юхма Мишши, «Кушак».)*

К у ш а к (*аллисемпе кăтартса*).

Пысăк уяв ячĕпе хăпарту пĕçертĕмĕр:
Ак çакăн пысăкăш, ак çакăн хулăнăш!

Кушак кукленсе ларать, «çывăрать».
Ачасем йăпшăнса килеççĕ, «хăпартăва» илеççĕ – алă çупаççĕ,
кушака вăратаççĕ – тараççĕ, вăл тытать.

А ч а с е м.

Шăши хăрать кушакран,
Кушак хăрать йытăран,
Йытă хăрать кашкăртан,
Кашкăр хăрать упаран,
Упа, упа, утаман
Хăрамасть вăл никамран. (*«Кам камран хăрать», П. Эйзин* )

## Раштав уйăхĕнче irttermelli вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **«Пирĕн туссем»**

***Тĕллевсем:*** пĕлекен юмахсене аса илесси; вĕсене выляма вĕренесси; сăнарсене хăй тĕллĕн тĕплĕн вылясси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** арча, качака, пахча çимĕçсем; юмахри сăнарсен тумĕсем (мăнук, асатте, асанне, качака, хăяр, помидор, купăста).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель асамлă арча йăтса кĕрет, унта ачасем юратнă юмахсем пурăнни çинчен пĕлтерет. Асамлă сăмах каласан, арча уçăлать – юмахри сăнарсем тухаççĕ. Ачасем асамлă сăмахсене аса илеççĕ, хаваслă кĕвĕ илтĕнет – вара арча уçăлать. Воспитатель тупмалли юмах калать.

В о с п и т а т е л ь.

Йĕкел хуппи тулли çăвăм пур,
Мăйăр хуппи тулли пылăм пур,
Енчĕк тулли сĕтĕм пур,
Кам-ши эпĕ? *(Качака)*

Воспитатель арчаран качака туртса кăларать.

К а ч а к а. Ачасем, сывлăх сунатăп сире! Ман çинчен юмах каласа пама пултаратăр-и эсир?

Ачасем тенкелсем çине лараççĕ, юмах аса илеççĕ. Воспитатель хăш-пĕр пайĕсене выляса пама ыйтать; интонацине, мимикине, сассине, хусканăвĕсене палăртма сĕнет, тĕслĕхсене аса илтерет.

В о с п и т а т е л ь. Асатте мăнукне качака çитерме ярать, кайран кĕтӳрен кĕтсе илет. Унтан мăнукне хăваласа ярать, кĕтĕве асаннене ярать. Татах кĕтӳрен качакана кĕтсе илет, асаннене хăваласа ярать, хăй çитерме каять, вара качакана çилленсе хăваласа ярать.

Мулкач пахчаран килне таврăнать, унта качака кĕрсе вырнаçнă. Кĕрейменнипе вăл йĕрет – кашкăр та, упа та ăна пулăшасшăн. Качакана автан çеç хăваласа кăлараять.

Хăш вăййине выляр-ши?

Ачасем «Ме-кек качака» вăййа выляççĕ.

А ч а с е м.

Ка-ач, ка-ач качакин
Лăпăс-лапăс сухалĕ,
Шĕп-шĕвĕркке мăйраки,
Кăкарам-и хурăнтан,
Кăшт ятлам-и хушăран.

М ă н у к.

Çиме çи те çиессе,
Пăрах эсĕ сикессе,
Йывăçсене ан кăшла,
Ан хуç манăн кăмăла! *(Н. Васанкка, «Ка-ач, ка-ач качака»)*

А ч а с е м.

Кача-кача-качаки,
Шăлтăр-шăлтăр мăйраки,
Тăпăр-тăпăр тяпписем, –
Ăçта каян, пĕлтерсем? *(Юхма Мишши, «Кача-кача-качаки»)*

А с а н н е.

Çиме çи те çиессе,
Пăрах эсĕ сикессе,
Йывăçсене ан кăшла,
Ан хуç манăн кăмăла!

А ч а с е м.

Каччин-каччин качаки
Чарусăра пултарать:
Карта умĕн уткалать,
Хушăк витĕр пăхкалать. *(Н. Васанкка, «Качака»)*

А с а т т е.

Çиме çи те çиессе,
Пăрах эсĕ сикессе.
Йывăçсене ан кăшла,
Ан хуç манăн кăмăла!

К а ч а к а.

Эпĕ ялти кĕтӳ пуç,
Часах килет шурăмпуç,
Ертсе мĕн пур выльăха
Каяс тетĕп улăха. *(Юхма Мишши, «Кача-кача-качаки»)*

А с а т т е.

Мекек-мекек качака.
Картлă-картлă мăйрака,

Картана хурам хупса –
Ан çӳре тек тустарса. *(В. Давыдав-Анатри, «Качака».)*

Воспитатель тупмалли юмахсем калать.

В о с п и т а т е л ь.
Мăнтăр кăна майра пур,
Сакăр вун сараппан тăхăнать. *(Купăста)*
Ниçта кĕме шăтăк çук,
Шалта пин çын пурăнать. *(Хăяр, арбуз)*
Хĕрли тутлă, сарри тутлă,
Салат çинче пурте тутлă. *(Помидор, пылак пăрăç)*

Ачасем чашăк çинчи пахча çимĕçсене сăнаççĕ, воспитатель «Пахча çимĕçсем» ятлă юмаха аса илме сĕнет.

* Пахча çимĕçсем мĕн çинчен тавлашнă?
* Купăста мĕнпе мухтаннă?
* Хăяр мĕн тенĕ?
* Мĕншĕн помидор çилленнĕ?
* Пахчана кам малтан килнĕ?
* Кольăна мĕн килĕшнĕ?
* Анне пахчаран мĕн илнĕ?

*Асăрхаттарни.* Хуравсене итленĕ май воспитатель ачасене купăста мĕнле мухтаннине, мулкач мĕнле чупса çитнине выляса кăтартма сĕнет. Кун хыççăн воспитатель ачасене хускану вăййи выляма чĕнет.

***«Пирĕн пахча» хускану вăййи.***

А ч а с е м (*карталанса утнă май юрлаççĕ*).
Касрăм, касрăм шурă ăвăс
Турăм, лартрăм шур карта.
Лартрăм, лартрăм купăста
Ӳсрĕ-ларчĕ купăста:
Ак çапла шур пуçлă.
Пурте пĕрле шăварар,
Пĕрлех касса купалар.

К у п ă с т а (*варринче ташласа*).
Ах, пиччесем, инкесем,
Ах, йăмăксем, шăллăмсем!
Пырăр, килĕр хăнана,
Шур купăста тутанма.

А ч а с е м.

Лартрăм, лартрăм эп хăяр
Ӳссе ларчĕ мăн хăяр:
Сарă, симĕс пуçлă.
Пурте пĕрле шăварар,
Пĕрлех татса пуçтарар.

Х ă я р (*варринче ташласа*).

Ах, пиччесем, инкесем,
Ах, йăмăксем, шăллăмсем!
Пырăр, килĕр хăнана,
Симĕс хăяр тутанма.

А ч а с е м.

Лартрăм, лартрăм помидор,
Ӳссе ларчĕ помидор:
Хĕрлĕ, çавра пуçлă.
Пурте пĕрле шăварар,
Пĕрлех татса пуçтарар.

П о м и д о р (*варринче ташласа*).

Ах, пиччесем, инкесем,
Ах, йăмăксем, шăллăмсем!
Пырăр килĕр хăнана,
Помидорпа сăйланма.

Воспитатель юмахри сăнарсен кайма вăхăт çитнине пĕлтерет, вĕсемпе сыв пуллашаççĕ, арча хупăнать.

В о с п и т а т е л ь.

Юмах юпа тăрринче,
Халап хапха тăрринче.

## *2-мĕш вăйă.* «Шартлама кунсем»

***Тĕллевсем:*** хĕл çитнипне савăнăçлă туйăм çуратасси; сăнарлă вăйăсем выляма вĕрентесси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** хĕллехи тум тăхăннă Варук пукане.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель Варук пуканене йăтса кĕрет. Ăна кĕрĕк, ăшă калпак, кăçатă тăхантартнă.

В о с п и т а т е л ь. Варук уçăлма тухасшăн, урамра сивĕ – ăшă тăхăн-

малла. Мĕнле вăйă выляма пулать-ши сивĕре? (*Ачасен хуравĕсем.*)

В а р у к. Ачасем, атьăр манпа пĕрле уçăлма!.

Ачасем «çунашка» çине пĕр-пĕрин хыççăн тăраççĕ, кĕвĕ майăн утаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр шурă юр –
Тĕрлĕ-тĕрлĕ илем пур!
Васкăр, ачасем,
Пурте урама.
Илĕр йĕлтĕрсем,
Тухăр урама!

А ч а с е м.

И çил-тăман, çил-тăман
Кăлтăрмач пек çаврăнать, çаврăнать,
Алла-аллăн тытăнар та
Кăлтăрмач пек çаврăнар,
Ак çапла! *(«Çил-тăман» юрă. Сăвви В. Алакерăн,*
*кĕвви В. Воробьевăн. «Чăваш музыки ача садĕнче»)*

Ачасем кĕртсем патне çитсе чарăнаççĕ. Варук алă ăшăтмалла вăйă вылясшăн, пурте пўрне вăййи выляççĕ.

**«Пўрне, пўрне, эс пытан» пўрне вăййи**.

Пўрне, пўрне, пўрнеçĕм,
Ăçта кайрăн, пўрнеçĕм?
Çак тăванпа иксĕмĕр *(пуç пўрнене хуçлатаççĕ)*
Çăнăх йăтма кайрăмăр,
Çак тăванпа иксĕмĕр (*шĕвĕр пўрнене хуçлатаççĕ*)
Çăмах çăрма кайрăмăр,
Çак тăванпа иксĕмĕр (*вăта пўрнене хуçлатаççĕ*)
Çапă пухма кайрăмăр,
Çак тăванпа иксĕмĕр (*ятсăр пўрнене хуçлатаççĕ)*
Çăмах яма кайрăмăр,
Çак тăванпа иксĕмĕр (*кача пўрнене хуçлатаççĕ*)
Çăмах çиме кайрăмăр.
*(Ача-пăча сăмахлахĕнчи йăпатмалли-илĕртмелли такмаксем)*

Варук юрпа выляма чĕнет: алăпа чăмакка тăваççĕ, тĕллеççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕлкĕшеççĕ лĕпĕшсем,
Шурă чĕнтĕр пĕркенеççĕ урамсем.

Ушкăн лĕпĕш анса ларчĕ ал çине,
Сивĕ сĕлкĕш пулса тарчĕ çĕр çине. *(В. Эктель, «Юр»)*

Кĕвĕ майăн ачасем тĕрлĕ хусканусем тăваççĕ: юр чăмăртаççĕ – тĕллеççĕ, юр кĕлеткиăсталаççĕ – пысăк чăмаккасем кустараççĕ, юртан тăвайкки купалаççĕ – кĕреçепе шаккаççĕ, витрепе шыв сапаççĕ. Воспитатель хусканусене сăмахпа каласа пырать. Вăйă вĕçĕнче Варукпа ачасем çунашкапа каялла таврăнаççĕ.

## *3-мĕш вăйă.* «Вăрманти чăрăшсем»

***Тĕллевсем:*** ачасене тĕрлĕ лару-тăрăва сӳтсе явма хăнăхтарасси; сăнара тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕрпе хусканура кăтартасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** симĕс чăрăш, пакша (тетте), кĕреçесем – вăйă выляма; калпаксем – упан тата куккукăн.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене хĕллехи вăрмана чĕнет. Хаваслă кĕвĕпе «çунашка» çине ларса пурте каяççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Акă çитрĕмĕр те. Вăрманта чăрăш нумай. Уçланкăра пĕр хирте чăрăш ӳсет. Ун тавра карталанса ташлама та пулать. Анчах та чăрăш патне пыма çук – юр питĕ нумай çуса лартнă. Мĕн тумалла? (*Ачасен хуравĕсем.*) Тĕрĕс, ачасем, кĕреçесем илмелле те юра хырса тасатмалла. Атьăр пĕрле ĕçе пикенер!

***«Ӳкрĕ кăпăш юр» хускану вăййи.***

В о с п и т а т е л ь.

Çитрĕç сивĕсем,
Шăнчĕç пĕвесем.
Мамăк пек шап-шур,
Ӳкрĕ кăпăш юр. *(А. Галкин, «Çитрĕç сивĕсем»)*

А ч а с е м (*аллисемпе юр купалаççĕ*).

Йăваларăм, йăваларăм –
Юр кĕлетке купаларăм.
Тыттартăм шăпăр аллине,
Кишĕр – сăмса вырăнне.
Пуç çине вара – витре.
Манăн тусăм пит хитре! *(Л. Николаева, «Юр кĕлетке»)*

В о с п и т а т е л ь (*чăрăш патнелле пырса*).

Çак пĕчĕк чăрăш пирĕн
Хитре çу кунĕнче

Шăп ларнă каçăн-ирĕн
Ик хурăн хушшинче. *(А. Алка, «Çĕнĕ çул»)*

Кĕвĕ май иккĕн ташлаççĕ, ыттисем алă çупаççĕ.

А ч а с е м.

Килĕр, килĕр, ачасем, вылятпăр,
Симĕс чăрăш тавра çаврăнатпăр,
Эпир чăрăш умĕнче
Вăй вылятпăр киленсе. *(«Симĕс чăрăш». И. Малкай*)

Иккĕн ташлаççĕ, ыттисем алă çупаççĕ.

# Кăрлач уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

## *1-мĕш вăйă.* «Çил-тăман юмахĕсем»

***Тĕллевсем***: ачасене иккĕн калаçма хăнăхтарасси, юмаха тимлĕ итлеме, каласа пама хăнăхтарасси, сăнара тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕрпе хусканура кăтартасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** икĕ юр пĕрчи, çил-тăман тумтирĕ, ӳкерчĕксем (çуллахи кун Якур ятлă çерçи йывăç çинче кăпшанкă шырани; выçă çерçи хурăн йывăççи çинче ларни; аслашшĕпе мăнукĕ сырăшсем çакни; Якур тепĕр çерçисем сырăш çинче тул пĕрчисене такканине сăнаса ларни; Якур ытти çерçисемпе пĕрле тулă пĕрчи таккани).

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитательпе ачасем пĕрле кантăк умĕнче хĕллехи çанталăка сăнаççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*икĕ юр пĕрчи тытса*).

Вĕлтĕр-вĕлтĕр шурă юр –
Тĕрлĕ-тĕрлĕ илем пур!
Васкăр, ачасем,
Пурте урама.
Илĕр йĕлтĕрсем,
Тухăр урама!

***«Юр пĕрчисем» калаçу вăййи.***

Ташă кĕвви кайсан ачасем хăйсем пĕлнĕ пек ташлаççĕ. Çав вăхăтра воспитатель калаçу ирттерет.

В о с п и т а т е л ь *(сылтăм аллинчи юр пĕрчи çине пăхса).* Юр пĕрчи, кала-ха, эсĕ ăçтан килтĕн?

1-м ĕ ш  ю р  п ĕ р ч и: Çил-тăман килĕнчен. Эпĕ пĕтĕм тĕлте вĕççе çӳреме пултаратăп.

В о с п и т а т е л ь (*сулхай аллинчи юр пĕрчи çине пăхса*). Эсĕ вара ăçтанха çакăн пек илемлĕ тумтир тупрăн?

2-м ĕ ш  ю р  п ĕ р ч и: Çил-тăман парнелерĕ. Çил-тăман – пирĕн анне, эпир – унăн ачисем.

Ачасем пурте пĕрле çил-тăмана чĕнеççĕ.
Çав вăхăтра воспитатель çил-тăман тумтирне тăхăнса кĕрет.

Ç и л - т ă м а н. Сывă-и, ачасем?
Эпĕ кунта хăнара.
Шăппăнах юрлатăп: у-у-у, у-у-у!
Кайран хытăрах: у-у-у, у-у-у!
Тата вăйлăрах: у-у-у, у-у-у!
Кашкăр пек улатăп: у-у-у, у-у-у!
Кайран лăпланатăп,
Шăппăнах юрлатăп: у-у-у, у-у-у!
Тĕнчере никам та
Хăрамасть манран!

Куртăр-и, ачасем, эпĕ те çепĕç те лăпкă пулма пултаратăп. Эсир – манăн ачасем, юр пĕрчисем, питĕ капăр та илемлĕ. Хăвăрăн тумтир çинчен каласа парăр-ха *(илемлĕ, капăр, йăлтăркаллă тата ытти те).* Эсир ăçталла вĕçетĕр? Пĕрле ташлар-и? Ачасем çил-тăманпа пĕрле ташланă хыççăн воспитатель вĕсене «Асамлă арча» юмах каласа парать.

**Асамлă арча**

*(Юмах)*

Пурăннă тет Якур ятлă çерçи. Вăл питĕ савăнăçлă çерçи пулнă тет. Кунĕпе вăл хăйĕн ĕçĕсемпе вĕçсе çӳренĕ: сирень турачĕ çинче ярăнать, хурăн йывăççи çине куçать е ахалех вĕçсе уçăлса çӳрет. Çуллахи кунсенче Якурăн апачĕ нумай пулнă. Хурт-кăпшанкă çинĕ, кӳлленчĕкрен шыв ĕçнĕ. Çаплах хĕл кунĕсем çитнĕ. Якурăн пурнăçĕ самаях йывăрланнă: хурт-кăпшанкă çывăрма выртнă, вĕсене шыраса тупма хĕн пулнă. Урамри кӳлленчĕксем пăрланнă. Вăл йывăççем çинче юлнă çырласене анчах çикелесе пурăннă. Мĕнле пурăнмалла малашне?

Çапла вăл пĕррехинче парка аслашшĕпе мăнукĕ килнине асăрханă. Вĕсем йывăççем çине сырăшсем çакнă. Якурăн çав тери унта мĕн пуррине пĕлес килнĕ, анчах вăл патнерех пырса пăхма шикленнĕ. Чылайччен ларнă Якур хурăн турачĕ çинчи сырăшсене сăнаса. Çав вăхăтра сырăш çине унăн юлташĕсем пырса ларнă та тулă пĕрчисене таккама пуçланă. Хăюлăхне пуçтарса Якур та юлташĕсем патне вĕçсе кайнă. Сырăш тĕпĕнче тулă пĕрчисене курнă та савăнсах таккама пуçланă.

## *2-мĕш вăйă.* «Кушак кăмака çинче юрăсем юрлать»

***Тĕллевсем:*** ачасен вырăс фольклорĕпе паллаштарасси; халăх сăмхлăхĕпе кăсăклантарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** вырăс халăх костюмĕ (тумтирĕ), кушак (тетте).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене Матрена тумĕпе кĕтсе илет, ушкăн пӳлĕмне вырăс халăх стилĕпе илемлетнĕ.

М а т р е н а. Тĕпĕлелле иртĕр, ачасем. Сирĕнпе паян выльăпăр, юмахсем калăпăр. Манăн çуртра кăмака пур. Вăл пире сивĕ пулсан ăшăтать, хырăм выççан тăрантарать. Кăмака çинче ман кушак Тимкка çывăрма юратать. Айтăр-ха ăна вăратар, унпа пĕрле вăйăсем выляр.

***«Кушак кăмака çинче» вăйă.***

Ачасем караланса утаççĕ, варринчи ача – кушак, ыттисем – шăшисем.

А ч а с е м.

И çил-тăман, çил-тăман
Кăлтăрмач пек çаврăнать, çаврăнать,
Алла-аллăн тытăнар та
Кăлтăрмач пек çаврăнар.
Ак çапла! *(«Çил-тăман» юрăран, сăвви В. Алакерăн,
кĕвви В. Воробьевăн.)*

Ачасем чарăнаççĕ.

К у ш а к (пăтă пĕçернĕ евĕр пăтратнă пек туса).

Пăри пĕрчи акрăр-и?
Пăри пătти çакрăр-и?
Сарă çуне сапрăр-и?
Мана çиме лартрăр-и?
(*Ача-пăча самахлахĕнчи чĕнӳ-йыхрав юрри*)

Ачасем тăпăртатса шалалла кĕреççĕ, тухаççĕ.

А ч а с е м.

Мяу, мяу хăй кăна
Мансăрах хăйма çиет.
Кун пек тутлă хăймана
Манăн та çиес килет. *(Юхма Мишши, «Кушак».)*

К у ш а к (*аллисемпе кăтартса*).

Пысăк уяв ячĕпе хăпарту пĕçертĕмĕр:
Ак çакăн пысăкăш, ак çакăн хулăнăш!

Кушак кукленсе ларать, «çывăрать».
Ачасем йăпшăнса килеççĕ, «хăпарту» илеççĕ – алă çупаççĕ, кушака вăратаççĕ – тараççĕ, вăл тытать.

А ч а с е м

Шăши хăрать кушакран,
Кушак хăрать йытăран,
Йытă хăрать кашкăртан,
Кашкăр хăрать упаран,
Упа, упа, утаман –
Хăрамасть вăл никамран. *(П. Эйзин, «Кам камран хăрать»)*

М а т р е н а. Манăн пулăшакансем пур, вĕсем – манăн алăсем. Шыв ăсса килме, кăмака хутма, пăтă пĕçерме, кил-çуртăма тасатма пулăшаççĕ вĕсем мана. Ачасем, сирĕн аллăрсем сире пулăшаççĕ-и?

***«Пӳрнесем – пулăшакансем» пӳрне вăййи.***

М а т р е н а (*пӳрнисене пĕрерĕн-пĕрерĕн хуçлатса*).

Ку шăллăм – вăрмана кайнă,
Ку шăллăм – яшка пĕçернĕ,
Ку шăллăм – пăтă çинĕ,
Ку шăллăм – юрăсем юрланă!

Ачасем воспитательпе пĕрле пӳрнисене пĕрре хуçлатаççĕ, тепре уçаççĕ.
Матрена хайĕн хĕрне, Алёна ятлă пуканене, илсе кĕрсе ачасемпе паллаштарать.

**Алена патĕнче хăнара**

*(Кулăшла сăвă)*

Алёна патĕнче хăнара
Чăх чĕпписем çăпатапа,
Автанĕ атă-пушмакпа,
Чăххи хăлха çаккипе,
Кăвакал сараппанпа,
Ĕни вара юбкăпа,
Ăшă кĕрĕк-пиншакпа.

Воспитатель сăвă вуланă май ачасене ӳкерчĕксем кăтартса пырать.
Кайран пурте пĕрле чей ĕçме лараççĕ.

## *3-мĕш вăйă.* «Верук театрта»

***Тĕллевсем:*** сăнара тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕрпе хусканура кăтартасси, роле вăхăтра кĕрсе сăнар ячĕпе калаçма вĕрентесси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** Верук пукане, спектакль валли кирлĕ хатĕрсем (пукансем, тĕрлĕ тумтир, схематика декорацийĕсем).

***Малтанхи ĕç:*** ачасем ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле театр билечĕсем хатĕрлеççĕ, афиша ӳкереççĕ, декораци элеменчĕсем хатĕрлеççĕ.

## В ă й ă ю х ă м ĕ

Ачасем патне Верук пукане килет. Верук нихăçан та театрта пулса курман, театр мĕнне те пĕлмест. Ăна пулăшмаллах. Ачасем Верука театр мĕнне, сцена çинче кам вылянине, спектакле кам пăхнине, хамăра театрта еплерех тытмаллине ăнлантараççĕ. Ачасем воспитательпе пĕрле пукансенчен сцена тăваççĕ, афиша çакаççĕ, билетсене валеçеççĕ. Ачасем черетпе актĕр тата куракан ролĕсене выляççĕ. Тӳлек кĕвĕ илтĕнет, спектакль пуçланать.

***«Виçĕ сысна çури» юмах импровизаци.***

В о с п и т а т е л ь. Пурăннă тет виçĕ сысна çури. Наф-наф (*ача тухать, кирлĕ хусканусем тăвать*), Нуф-Нуф (*тепĕр ача тухать*) тата Ниф-Ниф (*3-мĕш ача тухать*). Питĕ лайăх пурннă вĕсем (*ачасем – сысна çурисем савăнса ташлаççĕ*), нимĕн çинчен те шутламан тет. Часах хĕл кунĕсем çитнĕ. Наф-Наф пӳрт купалама шухăш тытнă.

Н а ф - Н а ф. Эпĕ çурт купалăп!

В о с п и т а т е л ь. Шăллĕсем унпа килĕшмен, хĕл лариччен вăхăт пурха тенĕ. Вĕсем малалла та пĕр шухăшсăр выляса пурăннă.

Ниф-Ниф тата Нуф-Нуф ташлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Наф-Наф вара пӳртне кирпĕчренех купаланă, нумай тăрăшнă.

Наф-Наф кирпич çине кирпич хунă пек кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Часах çанталăк сивĕтме пуçланă. Ниф-Нифпа Нуф-Нуф та çурт лартма шутланă. Ниф-Ниф улăмран пӳрт тунă. (*Улăмран тунă ӳкерчĕк кăтартать.*) Нуф-Нуф вара пӳртне туратсенчен ăсталанă. (*Туратсенчен тунă ӳкерчĕк кăтартать.*)

Н а ф - Н а ф (*шăллĕсен çурчĕсене курса*).

Эпĕ, паллах, чи ăсли,
Чи ăсли, чи ăсли!
Çурт хăпартрăм кирпĕчрен,
Кирпĕчрен, кирпĕчрен!
Чее усал чĕрчун та
Кĕреймĕ халь алăкран!

В о с п и т а т е л ь. Сасартăк сысна çурисем чăн-чăн кашкăра кураççĕ! Питĕ хытă хăраса кайнипе вĕсем пӳрчĕсене тарса пытанаççĕ. Кашкăр – вĕсем хыççăн. Ниф-Ниф пӳрте чупса кĕрет те алăкне хупса хурать.

Ача (Ниф-Ниф) пытаннă пек тăвать.

К а ш к ă р (*хыттăн кăшкăрса*). Уç алăкна!

В о с п и т а т е л ь. Ниф-Ниф уçма та шутламасть. Выçă кашкăр ун çуртне вĕрме пуçлать.

К а ш к ă р. У-у-у у!

В о с п и т а т е л ь. Улăм пӳрт салансах каять. Ниф-Ниф Нуф-Нуф çурчĕ патне чупса каять

Икĕ ача (Ниф-Нифпа Нуф-Нуф) пытаннă пек тăваççĕ.

К а ш к ă р (*Нуф-Нуф çурчĕ патне пырса*). Уç хăвăртрах алăкна! (*Хыттăн вĕрет.*) У-у-у у!

В о с п и т а т е л ь. Кĕçех турат çурт та салансах каять. Чупаççĕ тет сысна çурисем Наф-Наф патне. Хыçран кашкăр кăшкăрать.

К а ш к ă р. Халĕ эпĕ сире виççĕре те çисе яратăп! Уçăр алăка!

Н а ф - Н а ф. Ан хăрăр, манăн çурт çирĕп.

К а ш к ă р. У-у-у у!

В о с п и т а т е л ь. Темĕн чухлĕ вĕрсен те, алăкран шаккасан та кашкăр алăка çĕмĕреймен. Хăй вăйсăрлăхне курса вăл вăрманалла чупса кайнă. Кашкăр уласа илет те лĕпĕстетсе чупса каять.Сысна çурисем савăннипе ташлама пуçлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Çапла вара юмах та пĕтрĕ. Нуф-Нуф, Ниф-Ниф тата Наф-Наф пĕрле пурăнма шутлаççĕ, пĕр çуртра.

Спектакль пĕтнĕ хыççăн ачасем – выляkансем пуç таяççĕ. Верука театрта килĕшнĕ, вăл пурне те тав сăмахĕ калать.

## *4-мĕш вăйă.* «Виçĕ ăста тилĕ»

***Тĕллевсем:*** ачасен пултарулăхне аталанма пулăшасси, вăйă выляма хавхалантарасси, пĕр-пĕрин хушшинче килĕшсе рольсене пайласси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** çăмха, тилĕ костюмĕсем.

В ă й ă ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь (*ачасене çăмха кăтартатса).*Ачасем, çак çăм çиппинчен мĕн çыхма пулать-ши? (*Чăлха, нуски, алсиш тата ытти те*). Эсир çыхма пĕлетĕр-и? Эпĕ пĕр тилле паллатăп, вăл питĕ лайăх çыхма пĕлет. Ăста тилĕ хăйĕн шăтăкĕнче пурăнать.

Ачасем тилĕ патне каяççĕ, алăкран шаккаççĕ

А ч а с е м. Тук-тук, тилĕ тус, уç-ха алăкна!

***«Виçĕ ăста тилĕ» сценка.***

1-м ĕ ш  т и л ĕ.

Эпир виçĕ хĕрлĕ çӳç
Шăтăкра пурăнатпăр.

Шăллăмсене, йăмăксене
Алсишсем çыхатпăр.
Эй, тухăр, аппасем,
Ăсталăха кăтартма!

Тепĕр икĕ ача тилĕ костюмĕпе тухаççĕ, аллисенче çăмха.

2-м ĕ ш  т и л ĕ.

Çăм çиппи нумай арланă,
Ӳркенмен эпир пĕртте.
Тăрăшсах нускисем çыхнă
Ăшă пултăр-çке тяппи!

Тилĕсем ташлаççĕ, çыхнă пек хусканусем тăваççĕ.

3-м ĕ ш  т и л ĕ.

Нускисем кирлĕ пулсассăн
Ывăла е хĕр валли,
Хăнана килсе курсассăн,
Тупăнĕ те сан валли.

1-м ĕ ш  т и л ĕ: Еплерех ăста ман аппасем. Халĕ хĕлле, урамра сивĕ. Ачасене алсишĕ те, чăлхи те нумай кирлĕ. Чипер юлăр, ачасем!

Воспитатель ачасене вăйă выляса илме сĕнет.

***«Йĕппе çип» вăйă.***

Шăпа ярса икĕ ачана суйлаççĕ: пĕри йĕп пулать, тепри – çип. Вылякансем алла-аллăн тытăнса çавра тăваççĕ. Йĕппи тарать, çиппи хăвалать. Çавра тулашĕнче чупаççĕ. Енчен те йĕппи çавраваррине кĕрсе тарчĕ, çиппи вара ĕлкереймерĕ пулсан, карталанса тăнисем ăна кĕртмеççĕ. Çиппи йĕппине хăваласа тытрĕ пулсан, вĕсен вырăнне урăххисем йышăнаççĕ. Вăйă малалла тăсăлать.
*Асăрхаттарни.* Выляканăн (çиппин) çаврана чупса кĕнĕ чухне вăр-вар, çивĕч пулмалла. Вăйă картине татса яма юрамасть.

## Нарăс уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **«Лăпкă юрă»**

***Тĕллевсем:*** ачасене лăпкă сăпка юррисене, юмахсене ăнланса итлеме хăнăхтарасси; юмах сюжечĕпе кăсăклантарасси; илемĕпе кăмăл-туйăма çĕклентересси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** Ванюк пукане, сăпка юрри, театр валли ӳкерчĕксем (чĕрĕп çемйи; пĕчĕк чĕрĕп килĕнчен тухса кайни; пĕчĕк чĕрĕп вăрманта тăр пĕччен; чĕрĕп кашкăра тĕл пулни; чĕрĕп килне таврăнни).

В ă й ă  й ĕ р к и

Воспитатель ачасене сăпка юрри итлеттерет.

В о с п и т а т е л ь (*çывăракан пуканене ачасене кăтартса*).

Нянине – паппине,
Ачине – сăпкине
Лăштăн-лăштăн ярăнма,
Шăппăн-шăппăн çывăрма.
Нянине – тунине,
Ачине – урине
Тăппи-тăппи çӳреме,
Кăрăс-кăрăс тутарма.
Амăшне – пуçне,
Ачине – çунатне
Вăштăр-вăштăр вĕçтерме,
Лăпăш-лăпăш сиктерме.

Пурте çывăраççĕ, Ванюк та çывăрать. Урамра каç пулнă, тĕттĕм. Кушак та çăмхаланса выртнă, йывăççем, кĕперсем çывăраççĕ, çывăр Ванюк, çывăр эсĕ те. Ачасем, сире сăпка юрри килĕшрĕ и? Çак юрра юрласассăн Ванюк часах çывăрса каять. Эпĕ ăна яланах шăппăн, çепĕççĕн юрлатăп.

Шăна вĕçсе кĕресрен
Шăналăкне карăпăр.
Шăппăн-шăппăн çывăрма
Шăпчăк кĕвви калăпăр.

Воспитатель ачасене шăп ларма ыйтать, Ванюка майĕпен вырăн çине вырттарать. Камăн килĕнче шăллам е йăмăк пур, вĕсене сăпка юрри юрласа, юратса пăхмаллине аса илтерет.

## Пĕчĕк чĕрĕп

(*Юмах*)

Вăрманта чĕрĕп çемйи пурăннă тет: ашшĕ, амăшĕ тата вĕсен ывăлĕ – пĕчĕк чĕрĕп. Çав тери лайăх пурăннă вĕсем. Кăшт вăхăт иртсен вĕсен çемйинче тепĕр пĕчĕк чĕрĕп çуралать. Ашшĕ-амăшĕ ун тавра чупкалаççĕ, ăшă сĕт ĕçтереççĕ, çемçе çулçă сарса параççĕ. Аслă ывăлĕ анчах ĕçсĕр аптăрать, тăванĕсем хăйĕнпе вăхăт сахал ирттернĕрен хурланать. «Эпĕ кунта никама та кирлĕ мар», – тесе шутлать вăл. Çак шухăшпа вăл килĕнчен тухса тарать. Çул çинче йĕкелсемпе выля-выля вăл сисмесĕрех палламан вăрмана çитсе тăрать.

Часах каç та пулчĕ, урамра сивĕ те тĕттĕм. Пĕчĕк чĕрĕп тунсăхлăн шухăшлать: «Эх, килтех лармаллаччĕ иккен». Килте атте-анне çумĕнче ăшă, яланах ăшă сĕт, тутлă панулми пуррине аса илнĕ вăл. Сасартăк юнашар такам тарăннăн сывланине сисет. Ку вăл – кашкăр. Пĕчĕк чĕрĕп хăранипе çăмха пек пулса йĕпписене тăратса хурать. Усал кашкăр пĕшкĕннĕ те пичĕсене пĕтĕмпех йĕппе чиксе пĕтерет. Хăраса кайнипе кашкăр тепĕр еннелле тапсах сикет. Усал кашкăр мĕншĕн хăраса тарнине пĕчĕк чĕрĕп ăнланман.

Кăшт лăпланнă хыççăн пĕчĕк чĕрĕп йĕри-тавра пăхса илет те кил енне пĕтĕм вăйран чупса каять.

Кил умĕнче ăна хуйха путнă ашшĕпе амăшĕ кĕтсе тăраççĕ. Питĕ хытă пăшăрханнипе вĕсем пĕчĕк ывăлне вăрçма та хăяйман. Ашшĕ ăна çапла каланă:

– Ывăлăм, эсĕ халĕ пысăк. Килрен питĕ аякка каймалла мар, çывăхра кашкăрсем çӳреççĕ.

– Эсĕ ăçта пулнă, ачам? Эпир сансăр питĕ тунсăхлармăр, – тенĕ чĕрĕп амăшĕ.

Çак сăмахсене илтсен питĕ савăннă хайхи пĕчĕк чĕрĕп:

– Эсир мана юрататăр апла! – тенĕ вăл.

– Эпир сана питĕ хытă юрататпăр. Пур ашшĕ-амашĕ те ачи-пăчине юратать. Эпир санпа урăх нихăçан та уйрăлмăпăр, – ывăлне ыталаса каланă чĕрĕп амăшĕ.

– Атте, анне! Эпĕ паян кашкăра хăратрăм. Мĕншĕн иккенне хам та ăнланмарăм, – пĕлтернĕ пĕчĕк чĕрĕп:.

– Ачам, ку эсĕ пысăкланнине пĕлтерет. Санăн йĕппӳсем хытса çитнĕ ĕнтĕ, вĕсемпе эсĕ тăшмансенчен сыхланма пултаратăн. Эпĕ санпа мухтанатăп, – тенĕ ашшĕ.

Çак сăмахсем анчах кирлĕ пулнă пирĕн пĕчĕк чĕрĕпе. Вăл хăйне питĕ вăйлă туйса илнĕ. Çак кунран вăл яланах ашшĕпе амăшне итленĕ, пĕчĕк шăллĕне пăхма пулăшнă.

Юмах пĕтнĕ хыççăн воспитатель ачасен шухăшĕсене ыйтса пĕлет.

## *2-мӗш вӑййӑ.* «Верук икерчӗ пӗҫерет»

***Тӗллевсем:*** ачасене вӑййӑпа кӑсӑклантарасси; пӗр-пӗрин хушшинче килӗшсе рольсене пайласси.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** апат пӗҫермелли хатӗрсем, повар костюмӗ.

В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель кастрюль йӑтса кӗрет.

В о с п и т а т е л ь: Пирӗн ҫӗнӗ повар – Верук. Вӑл пире валли тутлӑ апат-ҫимӗҫ пӗҫерет.

«Верук икерчӗ пӗҫерет» инсценировка

В о с п и т а т е л ь.

Пирӗн Верук лайӑх повар,
Пит ӑста вӑл пӗҫерме.

В е р у к.

Килӗр, килӗр хӑнана
Тутлӑ икерчӗ ҫиме.

В о с п и т а т е л ь.

Верук чустине ҫӑрать,
Услам ҫу унта хушать.

В е р у к.

Килӗр, килӗр хӑнана
Тутлӑ икерчӗ ҫиме.

В о с п и т а т е л ь.

Пӗррехинче ун патне
Йытӑ килнӗ чей ӗҫме.

Й ы т ӑ.

Шӑршӑ туятӑп, хырӑм выҫӑ.
Пар часрах мана икерчӗ!

В о с п и т а т е л ь.

Йытӑ хыҫҫӑн ун патне
Кушак килнӗ ҫу ҫиме.

К у ш а к.

Мяук! Туятӑп ун шӑршине.
Икерчинчен ытларах.
Ҫу парсам, Верук, часрах!

В е р у к.

Килӗр, килӗр хӑнана
Тутлӑ икерчӗ ҫиме. *(А. Шибаева, Н. Губанова)*

Ку инсценировкăна пуканесемпе ирттерме пулать, е ачасем выляма пултараççĕ. Воспитатель ачасене савăнăçлă юрă ярса парать, апат пĕçермелле выляма сĕнет.

## *3-мĕш вăйă.* **«Тили-бом!»**

***Тĕллевсем:*** ачасене хăйсем тĕллĕн выляма хăнăхтарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** кушак çурчĕ валли юрăхлă декораци хатĕрĕсем (пӳрт, витре, пушар машини тата ытти те).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель пушар машини илсе кĕрет.

В о с п и т а т е л ь. Тили-бом! Тили-бом! Мĕн пулнă? Пушар машини килнĕ. Ăçта пушар? Çурт çунать! Кушак çурчĕ çунать! Хуçасене пулăшар!

Тили-бом, тили-бом,
Кушак пӳрчĕ çунать тет.
Чăххи чупать витрепе,
Лаши навскать шăпăрпа,
Вăрăмтуни, пĕчĕкскер,
Пулăшасшăн сӳнтерме,
Шывне йăтать кашăкпа.

Воспитатель ачасене вăйă выляса илме сĕнет.

***«Пушара тупса сӳнтермелле» вăйă.***

Сăвă каласа шăпа яраççĕ. Вылякансенчен пĕрне, шăпа тухнине, пӳлĕмрен тухма ыйтаççĕ. Урамра выляс пулсан япалана ăçта пытарнине ан куртăр тесе айккине илсе каяççĕ. Çав хушăра пысăках мар япалана пĕр-пĕр вырăна пытарса хураççĕ, пушар сӳнтерекенĕн (айккинче тăраканĕн) çавна тупмалла.

Ытти выляканĕсем пушарне (пытарнă япалине) епле шыранине тимлĕн пăхса тăраççĕ. Шыраканĕ пытарнă япаларан аякра пулсан, пурте харăс: «Сивĕ», – теççĕ, çывăха пыма тытăнсан: «Ăшă, ăшă», – тесе пулăшса тăраççĕ. Пытарнă япала патне пырсан: «Вĕри! Вĕри!» – тесе кăшкăраççĕ.

## *4-мĕш вăйă.* **«Савăнăçлă ярмăркка»**

***Тĕллевсем:*** ачасене пĕр-пĕринпе калаçма хăнăхтарасси; роль суйласа илсе калаçма хăнăхтарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** ярмăркка валли юрăхлă хатĕрсем (капăр кĕпе-йĕм), воспитатель валли – Матрешка тумĕ.

## В ӑ й ӑ ю х ӑ м ӗ

Воспитатель ачасен умне Матрешка тумӗпе тухать, ярмӑрккана йыхравлать.

М а т р е ш к а.

Васкӑр, васкӑр уява,
Савӑнӑҫлӑ ярмӑркка!
Пылак слон, мулкач, кулач –
Тем те пур кунта паян!

Ачасем Матрешка патне пыраҫҫӗ, япаласем илеҫҫӗ (укҫисене хутран касса тунӑ).

М а т р е ш к а.

Ак ҫӗнӗ кӗрӗксем,
Хӗрлӗ атӑ-пушмаксем,
Чаплӑ, йӳнӗ кӗпесем!

М а т р е ш к а (*хӗр ачана*).

Сире, чиперкке, мӗн килӗшет?
Ак пукане. Илетӗр-и?

Х ӗ р  а ч а. Илетӗп.

М а т р е ш к а (*арҫын ачана*).

Сире, маттур каччӑ,
Ҫурӑм ӑшши килӗшмест и?
Килӗшет пулсан – илетпӗр,
Е ыран тепре килетӗр?

А р ҫ ы н  а ч а. Илетӗп.

Ҫак калаҫӑвӑн тӗллевӗ ачасене пӗр-пӗринпе калаҫма хӑнӑхтарасси.
Ачасем сутаканӗ те, илекенӗ те пулса кураҫҫӗ.

М а т р е ш к а:

Хӗвел те анчӗ,
Уяв та вӗҫленчӗ.
Ярмӑркка вара, туссем,
Пулӗ-ха тепре, кӗтсем!

## Пуш уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* «Юмах арчи»

***Тĕллевсем:*** ачасемпе вĕреннĕ юмахсене аса илесси; роль суйласа илсе калаçма хăнăхтарасси; вăйăра сĕтел театрĕпе усă курма вĕрентесси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** чăрăш, теттесем – чĕрĕп тата çерçи.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене вăрмана уçăлма чĕнет. Ачасем унта мĕнпе каяссине суйлаççĕ (çунашкапа, йĕлтĕрпе, пуйăспа тата ыттипе те). Вăрмана çитсен ватă тунката çумĕнче арча тупаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ку арча асамлă. Кунта юмахсем пурăнаççĕ. Арча уçăлтăр тесен çакăн пек сăмахсем каламалла:

Арча, арча, уçăлсам,<br>
Юмах часрах юптарсам!

Пĕрремĕш юмах – «Пĕчĕк чĕрĕп» («Лăпкă юрă» вăййа пăхмалла).
Воспитатель ачасене чăрăш айĕнчи чĕрĕп çине пăхма сĕнет, вăл мĕнле юмахран иккенне ыйтса пĕлет. Чĕрĕп шăп-шăпăрт ларать. Ачасем нумаях пулмасть чĕрĕп çемйи çинчен юмах итленине аса илеççĕ. Воспитатель ачасене çак юмаха çĕнĕрен аса илме ыйтать. Сĕтел çинче чĕрĕп çемйи, кашкăр (теттесем) пур. Воспитатель юмаха теттесемпе усă курса сĕтел çинче выляса кăтартма сĕнет.

***«Чĕрĕп çемйи» вăйă.***

Ч ĕ р ĕ п  а ш ш ĕ.

Инçете эсир ан кайăр,<br>
Усал кашкăртан сыхланăр!

Ч ĕ р ĕ п  а м ă ш ĕ.

Нумайлăха ан çухалăр,<br>
Кашкăр апачĕ пулатăр!

В о с п и т а т е л ь.

Итлемеççĕ ачисем, хăрамаççĕ<br>
Аякран аякка чупаççĕ.<br>
Эх, шыраççĕ, эх, йĕреççĕ,<br>
Мĕн тумаллине пĕлмеççĕ.

П ĕ ч ĕ к  ч ĕ р ĕ п с е м.

Тухса тартăмăр килтен палламан вăрмана!<br>
Сасартăк выçă кашкăр уласа ярать.

К а ш к ă р. У-у-у!

Тараймастăр халь манран!

Çисе яратăп пурне те!

В о с п и т а т е л ь. Акă чĕрĕпсем хăраççĕ.

1-м ĕ ш  ч ĕ р ĕ п. Пĕтрĕмĕр эпир санпа!

2-м ĕ ш  ч ĕ р ĕ п. Аттене те, аннене те кураймастпăр пуль текех!

В о с п и т а т е л ь.

Хăранипе хыт чĕтреççĕ,

Çăмха пек пулса выртаççĕ.

К а ш к ă р (*ыратнипе кăшкарса*). Ой-ой-ой!

В о с п и т а т е л ь.

Кашкăр хытă кăшкăрать,

Чĕрĕпсем çинчен мансах,

Сиккипех вăл чуптарать!

Чĕрĕпсем килне васкаççĕ,

Чунтан каçару ыйтаççĕ.

Иккĕмĕш юмах – «Асамлă арча» («Çил-тăман юмахĕсем» пăхмалла).
Воспитатель ачасене кĕвĕ итлеттерет: «Кăна мĕн юрлать?» (*Çерçи юрлани илтĕнет.*)
Кайран арчаран çерçи туртса кăларать, унпа выляма сĕнет. Воспитатель пулăшнипе ачасем Якур ятлă çерçи çинчен юмах аса илеççĕ.

**Çерçи çулла**

Çерçи паркра вĕççе çӳрет. Вăл çунаттисемпе савăнăçлăн вылятать. Йывăç çине пырса ларса хурт-кăпшанкă çиет, шыв кӳлленчĕкĕнче шыв ĕçет.

**Çерçи хĕлле**

Çерçи çĕр çинче сиккелесе çӳрет, апат шырать. Турат çинче хурлăхлă ларать. Ăнсăртран сырăш курать. Асăрханса ун патне вĕççе пырать. Тулă тырă пĕрчисене таккама пуçлать. Çерçи савăнăçлă чĕвĕлтетет.

***Сасса уçмалли «Савăнăçлă – хурлăхлă» вăййă.***

В о с п и т а т е л ь. Паркра çерçисем юрланă.

Ç е р ç и с е м. Чĕвĕл-чĕвĕл, чĕвĕл-чĕвĕл!

В о с п и т а т е л ь. Эсир камăн, çерçисем?

Ç е р ç и с е м. Чĕвĕл-чĕвĕл, чĕвĕл-чĕвĕл!

В о с п и т а т е л ь. Çулла савăнсах юрлаççĕ.

Ç е р ç и с е м. Чĕвĕл-чĕвĕл, чĕвĕл-чĕвĕл!

В о с п и т а т е л ь. Йăва çавăраççĕ.

Ç е р ç и с е м. Чĕвĕл-чĕвĕл, чĕвĕл-чĕвĕл!

В о с п и т а т е л ь. Хĕлле вĕсен апат çук.

Ç е р ç и с е м. Чĕвĕл-чĕвĕл, чĕвĕл-чĕвĕл!

В о с п и т а т е л ь. Апат тупма май çук.
Ç е р ç и с е м (*хурлăхлăн*). Чĕвĕл-чĕвĕл, чĕвĕл-чĕвĕл!
В о с п и т а т е л ь.

Килĕр, килĕр, кайăксем!
Сире вăрă парăпăр,
Тĕпренчĕксем сапăпăр,
Килĕр,васкăр, кайăксем!

Выляса пĕтернĕ хыççăн ачасем воспитательпе пĕрле арчана хупаççĕ.

## *2-мĕш вăйă.* «Мĕн çурисем?»

***Тĕллевсем:*** ачасене шухăшласа кăларнă лару-тăрăва явăçтарасси; чĕр чунсен рольне витĕмлĕ выляма вĕрентесси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** сысна, йытă, кушак калпакĕсем, 3 кăвак тата 3 хĕрлĕ матрешка.

В а й ă ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене «чĕр чунсен садне» илсе килет.

В о с п и т а т е л ь. Куна чĕр чунсем садикреирттереççĕ. Кунта вĕсем çиеççĕ, выляççĕ, уçăлма тухаççĕ, вĕренеççĕ. Пĕчĕккисен ушкăнне сысна çури, йытă çури тата кушак çури çÿреççĕ. Вĕсене амăшĕсем садике ир-ирех леççе яраççĕ. Чĕр чунсем пуçтарăнса çитсен воспитательпе пĕрле зарядка тăваççĕ.

Ачасем воспитатель хыççăн хусканусем тăваççĕ. Кайран пурте пĕрле çăвăнма каяççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Сăрă мулкач пит çăвать,
Хăнана пуçтарăнать:
Сăмсине çурĕ,
Тутине çурĕ,
Хăлхисене çурĕ,
Тяппине шăлса типетрĕ.

Ачасем çăвăннă пек хусканусем тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ вара вĕренмелли вăхăт çитрĕ. Малтан математика пулĕ.

Ак матрешкăсем лараççĕ,
Чĕр чунсем çине пăхаççĕ.
Кунта – хĕрлисем,
Кунта – кăваккисем.

Пĕрер матрешка илсе
Чупăр ман хыçран.

Ачасем çавракана тăрса чупаççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*йытă çурине*). Санăн миçе матрешка?

Й ы т ă  ç у р и. Хам!

В о с п и т а т е л ь (*кушак çурине*). Санăн миçе?

К у ш а к  ç у р и. Мяук!

В о с п и т а т е л ь (*сысна çурине*). Санăн миçе матрешка?

С ы с н а  ç у р и. Нĕрик!

В о с п и т а т е л ь. Пурин те пĕрер матрешка. Халь вара…

Пурте хăйсен матрешкисене сĕтел çине хураççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халь миçе матрешка? (*Нумай!*) Халĕ вара сасăсене уçса илетпĕр.

В о с п и т а т е л ь *(юрласа)*. Кушак çури çапла юрлать.

К у ш а к  ç у р и. Мяук-мяук!

В о с п и т а т е л ь. Йытă çурийĕ хамлатать.

Й ы т ă  ç у р и. Хам-хам! Хам-хам!

В о с п и т а т е л ь. Сысна çури нăриклетет.

С ы с н а  ç у р и. Нĕрик-нĕрик!

В о с п и т а т е л ь. Каçхине ачисене илме амăшĕсем килеççĕ. Ачисене çапла чĕнеççĕ.

С ы с н а.

Нăрик-нăрик!
Сысна çури ман ача.

С ы с н а  ç у р и (*çинçе сасăпа*). Нĕрик-нĕрик!

Й ы т ă (*хулăм сасăпа*).

Инçетрен эпĕ килтĕм,
Хамăн çурана чĕнетĕп:
Хам-хам! Хам-хам!

Й ы т ă  ç у р и (*çинçе сасăпа*). Хам-хам! Хам-хам!

К у ш а к (*хулăм сасăпа*).

Ах, ăçта-ши ман ача,
Итлеме пĕлмен çура?
Мяук-мяук! Эс ăçта?

К у ш а к  ç у р и (*йăвашшăн*). Мяук-мяук!

Çак вăййа тĕрлĕрен выляма пулать: малтан чĕр чунсем вырăнне воспитатель калаçать, кайран – ачасем. Воспитатель ачасене уйрăмах чĕр чунсен сассисене еплерех каларнине асăрхаттарать.

## *3-мĕш вăйă.* **«Хĕл иртсе кайрĕ»**

***Тĕллевсем:*** ачасене çăварни уявĕ çинчен каласа парасси; çут çанталăкăн икĕ вăхăтне танлаштарасси (хĕлле – çуркунне); ачасен кăмăл-туймне çĕклесси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** хĕлле тата çуркунне костюмĕсем.

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель ачасене тумлам тумланă сасса итлеттерет.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн сасси? Ăçтан вăл? Сивĕсем иртсе кайрĕç, урамра çанталăк ăшăтса пырать, çакă хĕл кунĕсем иртсе пынине пĕлтерет. Çут çанталăк вăранать, йывăçсем çинче кайăксем юрлаççĕ: чĕвĕл-чĕвĕл, чĕвĕл-чĕвĕл, çуркунне килет!

Х ĕ л л е тухать. Ун рольне воспитатель е аслă ушкăнри ача вылять.

Х ĕ л л е. Хĕл сиввинчен хăратăр-и, ачасем?

А ч а с е м: Çук.

Х ĕ л л е. Сире яланах хĕлле пулсан килĕшет-и? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Вĕлтĕр-вĕлтĕр шурă юр –
Тĕрлĕ-тĕрлĕ илем пур!
Васкăр, ачасем,
Пурте урама,
Илĕр йĕлтĕрсем,
Тухăр урама!

Ачасем, эсир манпа выляма хатĕр-и?

А ч а с е м. Хатĕр!

Ачасем юр чăмаккисемпе пемелле выляççĕ.

Х ĕ л л е. Куратăп, ачасем, эсир чăнах та юрататăр мана.

Ушкăна Ç у р к у н н е кĕрет.

Ç у р к у н н е. Хĕлле, санăн каймалла, манăн вăхăт çитрĕ.

Х ĕ л л е. Ман кăштах кунтах пулас килет. Ачасем манпа татах выляс-шăн, тăвайккинчен ярăнасшăн.

Ç у р к у н н е. Ачасем, эсир мана астăватăр-и?

А ч а с е м. Астăватпăр.

Ç у р к у н н е.

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене
Хĕл ыйхинчен вăратса.
Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,

Ешӗл тумтир тӑхӑнать.
Çеçен хир те ешерет,
Илемӗпе мухтанать. *(К. Иванов, «Нарспи»)*

В о с п и т а т е л ь. Тавлашма кирлӗ мар. Эпир хӗллене те, çуркуннене те юрататпӑр. Кашни вӑхӑтӑн хӑйӗн илемӗ. Анчах та, хӗлле, санӑн кайма вӑхӑт çитнӗ.

Х ӗ л л е. Мӗнех, чипер, ачасем. Çил-тӑман кӗтет мана.

А ч а с е м. Чипер! Тепре тӗл пуличчен!

В о с п и т а т е л ь. Халӗ санӑн вӑхӑт, Çуркунне!

Кайӑксем юрланӑ сасӑ илтӗнет, ачасем ташлаççӗ.

Ç у р к у н н е.

Савӑнаççӗ чӗр чунсем,
Хӗпӗртеççӗ кайӑксем:
Çӳл тӳпе хӗвеллӗ,
Ачасем тӗлейлӗ.
Тухӑр пурте урама!

## *4-мӗш вӑйӑ.* **«Парикмахер патӗнче»**

***Тӗллевсем:*** ачасен парикмахер ӗçӗпе паллаштарасси; сюжетлӑ вӑййапа кӑсӑклантарасси; иккӗн калаçса выляма хӑнӑхтарасси.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** парикмахера кирлӗ хатӗрсем (хачӑ, тура, фен, бигуди тата ытти те), шур халат.

В ӑ й ӑ й ӗ р к и

В о с п и т а т е л ь (*ачасене пукане кӑтартса*). Курӑр-ха, Вальӑн çӗнӗ прическа тӑвасшӑн. Вӑл хӑйӗн тантӑшӗсене çӗнӗ прическа тума чӗнет.

В а л я.

Хачӑ, фен тата тура –
Çӗн прическа тумалла.
Килтӗм эпӗ салона
Парикмахер, эс ӑçта?

Воспитатель шурӑ халат тӑхӑнать те парикмахер пулса тӑрать.

П а р и к м а х е р. Эпӗ кунта. Валя, çӗнӗ прическа тума килтӗн-и? (*Çӳç каснӑ пек хусканусем тӑвать.*) Пулчӗ те. Епле илемлӗ пирӗн Валя!

Вальӑн тантӑшӗсем прическа тума черете тӑраççӗ.
Воспитатель ачасене парикмахер рольне выляса пӑхма сӗнет. Вӑйӑ пӗтсен вӑл парикмахерӑн ӗç вӑхӑчӗ вӗçленнине, ыттисем ырана çырӑнма пултарнине пӗлтерет.

## Ака уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* «Теттесен хули»

***Тĕллевсем:*** ачасене çул çӳревпе кăсăклантарасси; çĕнĕ персонажсемпе паллаштарасси; вăйăра пĕр-пĕринпе калаçса выляма пĕлнине аталантарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** персонажсен костюмĕсем, теттесем – упа, тилĕ.

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель ачасене теттесен хулине кайса курма сĕнет. Автобус çине лараççĕ те водителе суйлаççĕ. Автобус пырать, ачасем сăвă калаççĕ.

А ч а с е м.

Тӳрĕ тикĕс çулпала
Пĕр автобус вĕçтерет.
Хăйне ирĕк çул пама
Таçтанах вăл систерет.
Ту-ту-ту! ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту! (*Уйăп Мишши*)

В о с п и т а т е л ь. Пĕрремĕш чарăну – Вăрман урамĕ.

В о с п и т а т е л ь (*аллинчи теттене, пыл çисе ларакан упана, кăтартса*). Ачасем, мĕн тăвать ку упа? (*Хуравсем.)* Тĕрĕс, ачасем, упа вăрманта пурăнать, пыл юратать, хĕлле çывăрать.

Эпĕ упа-утаман,
Ик урапа утакан,
Пур кайăкран хытăрах
Мĕкĕрттерсе улакан.
Çăва тухсан – вăрманта
Вĕллесене ватакан,
Тутлă пылне çиекен,
Ĕнесене тытакан… *(Н. Шелепи)*

Ачасем воспитательпе пĕрле упа пек утаççĕ, у-у-у сасă кăлараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пире автобус кĕтет.

Ачасем «автобуспа» малалла каяççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Тепĕр чарăну – Туслăх урамĕ. Ку урамра тилĕ пурăнать. Вăл таçта васкать.

***«Тилĕ кĕпер тăрăх утать» инсценировка.***

В о с п и т а т е л ь.

Тилĕ кĕпер тăрăх утать,
Пĕр çыхă çапă йăтать.
Мĕн тăвать вăл çапăпа?

Т и л ĕ. Кăмака хутатăп.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн тума кирлĕ сана кăмака?

Т и л ĕ. Апат пĕçерме.

В о с п и т а т е л ь. Апачĕ мĕн тума?

Т и л ĕ. Хăнасене çитерме.

В о с п и т а т е л ь. Хăнисем камсем?

Т и л ĕ.

Упа мăшăрĕпе,
Чĕрĕппе кушак
Тата эпир санпа.

Воспитатель ачасене теттесем хăнана кайма тухнине кăтартать: упа, унăн мăшăрĕ, чĕрĕп, кушак тата ачасем.

***«Тилĕ патне хăнана» инсценировка.***

Инсценировкăра выляканси (ертсе пыракан – воспитатель; чĕрĕп, кушак, упапа мăшăрĕ – ачасем) çулпа пынă пек тăваççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Тилĕ тус пире паян хăнана чĕннĕ.

Ч ĕ р ĕ п. Тук-тук-тук, эпĕ килтĕм хăнана.

Т и л ĕ. Питĕ хавас, кĕр часрах.

Е р т с е  п ы р а к а н. Хăнасем пуçтарăннă, кил хуçи валли парне илсе килнĕ.

К у ш а к. Сана валли апата парне пултăр ман котлет.

Т и л ĕ. Тавах, тавах. Вырнаçăр.

У п а п а  м ă ш ă р ĕ. Сан валли арăмпа илсе килтĕмĕр çырла.

Т и л ĕ. Тавах, тавах. Вырнаçăр.

Савăнăçлă юрă янăрать. Ачасем полька ташлаççĕ.
Воспитатель ачасене киле каймаллине аса илтерет. Пурте пĕрле «автобус çине лараççĕ» те садике таврăнаççĕ.

## *2-мĕш вăйă.* «Тараватлă юхан шыв»

***Тĕллевсем:*** ачасен сăнарлă шухăшлавне аталантарасси; çĕнĕ юмахпа паллаштарасси; юмахри сюжета çанталăкри пулăмсемпе танлаштарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** юмаха каласа памалли ӳкерчĕксем (çуркунне çитнĕ, юр ирĕлет тата ытти те).

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель ачасене шыв юххи сассине итлеттерет.

В о с п и т а т е л ь.

Çӳлте хĕвел йăл кулать.
Шур юр унтан вăтанать,
Шур юр унтан вăтанать,
Ирĕлет те шыв пулать. (*В. Давыдов-Анатри)*

Воспитатель ачасене ӳкерчĕксен театрне чĕнет.

**Шыв юххисем**

(*Юмах*)

Çуркунне икĕ шыв юххи пулса тăнă, икĕ пĕртăван. Вĕсем уçланкăсем, çырма тăрăх, вată чăрăшсем айĕнчен чупнă. Питĕ савăнăçлă пулнă вĕсем, шăнкăртатнă: шар-шар-шар. Икĕ шыв юххи аран курăннă – çав тери пĕчĕккĕ пулнă вĕсем.

Пĕррехинче икĕ шыв юххи пысăк уçланкăна чупса тухнă. Хĕвел хĕртсе пăхнă, уçланкăри юра ирĕлтернĕ. Икĕ пĕртăван йĕри-тавра хăйсем пек пĕчĕк шыв юххисем васкавлăн чупнине асăрханă: «Эй, пире кĕтсе тăрăрха!». Лешĕсем хирĕç кăшкăрнă: «Эпир пысăк юхан шыва васкатпăр. Пырăр пирĕнпе пĕрле!» Икĕ пĕртăван юхан шыв мĕн иккенне пĕлмесĕрех вĕсем хыççăн чупнă. Чупсан-чупсан тинех юхан шыв хĕррине çитнĕ. Питĕ тарăн та сарлака пулнă юхан шыв. Хытă чупса кайса икĕ пĕчĕк юхан шыв пысăк юхан шыва сикнĕ, унпа пĕрлешсе кайнă. Юхан шыв хăйĕн çумне пĕчĕк шыв юххисене пуçтарса пысăклансах пынă.

Воспитатель ачасене урама тухса юмахри самантсене сăнама сĕнет.

## *3-мĕш вăйă.* «Зоопарк»

***Тĕллевсем:*** ачасене тискер чĕр чунсемпе паллаштарасси; чĕр чунсене юратма вĕрентесси; ачасен кăсăклăхне аталантарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** упăте, тигр, слон (теттесем).

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитательпе ачасем зоопарк çинчен видеосюжет пăхаççĕ: чĕр чунсене мĕнле пăхни, мĕн çитерни, вĕсемпе калаçни çинчен. Иллюстрацисем кăтартать, чĕр чунсем çинчен калавсем вуласа парать, калаçу ирттерет.

***Калаçу***

Зоопаркра чĕр чунсем ятарласа тунă вырăнта – вольерта пурăнаççĕ. Чĕр чунсене курма зоопарка çынсем килеççĕ, чылай вăхăт вĕсене сăнаççĕ. Унта вăрах çӳреме юрать, кунĕпех те: чĕр чунсем каннине, апат çинине, уçăлса çӳренине. Çавăн пекех курма килекенсем зоопарк ĕçченĕсем мĕн-мĕн тунине сăнама пултараççĕ: вольерсене тасатнине, чĕр чунсене апат панине. Енчен те пĕр-пĕр чĕр чун чирлет пулсан, ун патне ветеринар тухтăрне чĕнеççĕ. Вăл чĕр чунсене пăхать, эмел парать. Чылай чухне вĕсем чирлесси курма килекенсенчен килет. Хăшĕ-пĕрисем зоопаркри чĕр чунсене килтен илсе килнĕ апата çитерме юраманнине, çакă вĕсене сиен кӳме пултарассине пĕлмеççĕ. Асăрхануллă пулмаллине аса илтерме зоопаркра «Чĕр чунсене çитерме юрамасть!» текен табличкăсем çакăнса тăраççĕ.

Çамрăк чĕр чунсем нумай выляма, çиме, уçăлса çӳреме юратаççĕ. Вĕсене сăнама та интереслĕрех. Амăшĕсем вĕсене сыхлаççĕ, апат çитереççĕ. Чĕр чунсем яланах хăйсен çурисене хӳтĕлеççĕ.

***Лару-тăру вăййи.***

Воспитатель çемçе теттесемпе усă курса лару-тăру вăййи ирттерет. Ушкăн пӳлĕмĕнче тĕрлĕ чĕр чунсене лартса тухать: слон çурипе, чечексем хушшинче – тигр (джунгли), упăте – турат çинче... Экскурсовод вырăнне – воспитатель хăй.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир сирĕнпе зоопарка килтĕмĕр. Халь ирхине чĕр чунсем апатланма хатĕрленеççĕ. Айтăр, пăхар, мĕн çиме юратаççĕ вĕсем. (*Упăте патне ертсе пырать.*) Ку мĕн? Ку упăте. Упăте, эсĕ мĕн çиме юрататăн?

У п ă т е. Банан юрататăп, вăл питĕ усăллă.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн ачасене те бананпа хăнала-ха.

Упăте йывăç çине хăпарнă пек, аялалла банансем ывăтнă пек хусканусем тăвать.

В о с п и т а т е л ь. Тавах сана, упăте. Банан питĕ тутлă!

В о с п и т а т е л ь. Халь, ачасем, тигр мĕнле пурăннине пăхар-ха. Кунта çемье: ашшĕ, амăшĕ тата вĕсен пĕчĕк тигр çурийĕ.

Воспитатаель ачасенчен вĕсем тигр çинчен мĕн пĕлнине ыйтса пĕлет.

В о с п и т а т е л ь. Малалла эпир слон çемйи патне каятпăр. Кунта слонсем нумай. Çурисем ашшĕ-амăшĕсенчен пĕчĕкрех иккен.

Слонсем ҫинчен ачасемпе калаҫу ирттерме пулать. Кайран воспитатель пурне те пӗрле слонсен ташшине ташлама сӗнет. Ачасем «пысăк хăлхасем» туса кăтартаҫҫӗ, кăнттам хусканусем туса ташлаҫҫӗ.

## *4-мӗш вăйă.* **«Асамлă шăхлич»**

***Тӗллевсем:*** ачасене юмаха драма евӗр выляса кăтартма май пуррипе кăсăклантарасси; ҫӗнӗ юмахпа паллаштарасси; тимлӗхе аталантарасси.

***Кирлӗ хатӗрсем:*** шăхличӗ, кайăк кӳлепиллӗ теттесем (тăри, чӗкеҫ, пилеш кайăкӗ), кайăксен калпакӗсем, фланелеграф валли ӳкерчӗксем (тилӗпе тăрна калаҫаҫҫӗ, тилӗ тăрна ҫинче вӗҫет, тилӗ тăрна ҫинчен ӳкет, тилӗ улăм капанӗнчен тухать).

В ă й ă й ӗ р к и

Воспитатель ачасене асамлă шăхлич кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Шăхлич юрлама пуҫласанах кайăксем вӗҫсе килеҫҫӗ, сывлăшра ташлама пуҫлаҫҫӗ.

Воспитатаель шăхличӗ калать. Часах кайăксем вӗҫсе килеҫҫӗ (аслă ушкăнри ачасем е ширма хыҫӗнчи кайăк кӳлепиллӗ теттесем). Флейта сасси илтӗнет. Кайăксем савăнса ташлаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Ҫуркунне ҫитнӗ! Кайăксем ăшă ҫӗртен таврăнаҫҫӗ. Акă тăри вӗҫет пирӗн пата.

Тăр-тăри!
Тăри ирех тăнă та
Шăрантарать юррине:
Тăр-тăри, тăр-тăри,
Ирпе ирех тăтăр-и?
Пăри пӗрчи акрăр-и
Пăри пăтти ҫакрăр-и?
Сарă ҫуне сапрăр-и?
Ҫиме мана лартрăр-и? *(Чăваш халăх сăмахлăхӗ)*

Воспитатель ачасене тăри юррине сăнлакан йӗркесене аса илсе евӗрлеме хавхалантарать, пулăшать.

**«Тилӗ вӗҫме вӗренни» юмах. Фланелеграф ҫинчи театр.**

Е р т с е   п ы р а к а н. Тăрнапа тилӗ тӗл пулнă.

Т ă р н а. Тилӗ, вӗҫме пӗлетӗн-и?

Т и л ӗ. Ҫук, пӗлместӗп.

Т ă р н а. Лар ман çине, вĕрентетĕп.

Е р т с е п ы р а к а н. Тилĕ тăрна çине хăпарса ларчĕ. Çӳлех вĕçсе хăпарчĕç вĕсем.

Т ă р н а. Мĕн, тилĕ, çĕр курăнать-и сана?

Т и л ĕ. Кăштах, сурăх пысăкăш.

Е р т с е п ы р а к а н. Тăрна тилле хăйĕн çинчен силлесе пăрахать. Тилĕ улăм купи çине ӳкет.

Т ă р н а. Мĕнех, тилĕ, вĕçме пĕлетĕн-и?

Т и л ĕ. Вĕçме вĕçетĕп-ха, ларма кансĕртерех.

Т ă р н а. Лар ман çине, вĕрентетĕп.

Е р т с е п ы р а к а н. Тилĕ тăрна çине хăпарса ларать. Тата çӳлерех вĕçсе хăпараççĕ вĕсем. Тăрна тилле татах хăйĕн çинчен силлесе пăрахать. Хальхинче тилĕ шурлăха ӳкет. Çапла вара тилĕ вĕçме вĕренеймен.

Воспитатель ачасен шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлет. Вĕсем асамлă шăхличе тав сăмахĕ калаççĕ, сывпуллашаççĕ.

## Çу уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* «Хĕвел, тух!»

***Тĕллевсем:*** ачасене чăваш халăх сăмахлăхĕпе паллаштарасси; персонажсен ячĕпе калаçма хăнăхтарасси; вăйăра иккĕн е виççĕн калаçса татăлса выляма пĕлнине аталантарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** теттесем – чĕрĕп, упа, тилĕ, мулкач; хĕвел.

В ă й ă й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, асăрхăр-ха, паян пирĕн ушкăнра питĕ çутă. Хăнана хĕвел килнĕ.

Килчĕ ырă çуркунне,<br>
Килчĕ ячĕ ăшăтса.<br>
Хĕвел савать тĕнчене<br>
Хĕл ыйхинчен вăратса. *(К. Иванов)*

Ачасем вăйă картине тăраççĕ, чĕнӳ-йыхрав сăвви калаççĕ.

А ч а с е м.

Хĕвел, пăх! Хĕвел, пăх!<br>
Çупа чăкăт çитереп.<br>
Хĕвел, хĕвел, кулса тух,<br>
Хĕвне кулă чиксе тух. *(Чăваш халăх сăмахлăхĕ)*

Ачасем карталанса тăрса «Хĕвел, пăх, хĕвел, пăх…» пӳрне гимнастики тăваççĕ.

Хĕвел, пăх, хĕвел, пăх!<br>
Ачу шыва кайрĕ вĕт,<br>
Турчăкапа туртса кăлартăм,<br>
Пурçăн кĕпе тăхăнтартрăм,<br>
Пурçăн саппун çактартăм,<br>
Пурçăн тутăр çыхтартăм,<br>
Пылпа кулач çитертĕм. (*Чăваш халăх сăмахлăхĕ*)

Сăвă каланă май ачасем пӳрнисене хуçлатса пыраççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, асăрхăр-ха, чĕр чунсем хурăн йывăççи айĕнче сулхăнра лараççĕ. Хăшне те пулин паллатăр-и? Ячĕсене калăр-ха.

А ч а с е м. Тилĕ, мулкач, упа, чĕрĕп.

***«Пит аван-çке сулхăнра» юрă инсценировки.*** («Тень-тень, потетень» халăх юрри тăрăх.)

В о с п и т а т е л ь.

Пит аван-çке сулхăнра
Ушкăнпа канма.
Пĕр-пĕрин çине пăхса
Мухтанса ларма.
Акă тилĕ мухтанать.

Т и л ĕ.

Тĕнчере эп чи хитри!

В о с п и т а т е л ь.

Мулкачи унран юлмасть.

М у л к а ч.

Çиçĕм евĕр эп чупап!

В о с п и т а т е л ь.

Мухтанаççĕ чĕрĕпсем.

Ч ĕ р ĕ п с е м.

Пирĕн кĕрĕксем аван!

В о с п и т а т е л ь.

Мухтанать упа та.

У п а.

Эп пĕлетĕп юрлама!

Воспитатель ачасене чĕр чунсем выраннне калаçса пăхма сĕнет. Тепре выляна чухне сĕтел çинчи театрпа усă курма пулать.

## *2-мĕш вăйă.* **«Вĕç, лĕпĕш»**

***Тĕллевсем:*** ачасене юрă-ташă урлă юмахри персонажсене кăтартса пама вĕрентесси; çĕнĕ юмахпа паллаштарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем*:** лĕпĕш тата чечек калпакĕсем; ӳкерчĕксем: лĕпĕшсем уçланкăра вĕçни; лĕпĕш чечек сĕткенне ĕçни; лĕпĕш шăнкăрав курăкĕ çумĕнче вĕçни; вăйлă çил лĕпĕше вĕçтерсе кайни; шăнкăрав курăкĕ çилпе тайăлни; лĕпĕш шăнкăрав курăкне шырани; шăнкăрав курăкĕпе лĕпĕш тĕл пулни.

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель ачасене çуркуннехи уçланкăна йыхравлать. Кунта чечексем ӳсеççĕ, хитре лĕпĕшсем вĕçеççĕ. Воспитатель ачасене вăйă выляма сĕнет.

***«Чечексем» вăйă.***

Вăйăра кирлĕ материал: пĕр формăллă темиçе тĕслĕ картунран тунă çулçăсем. Воспитатель икĕ ачана чĕнсе илет те пĕр тĕслĕ чечексен пуххине парать. Чечексем ачасен умĕнче арпашăнса выртаççĕ. Воспиатель йышлă çеçкеллĕ (махровый) пĕрер чечек кăларса хумалли çинчен ăнлантарать. Пĕрремĕш ачан варринчен пуçласа хĕрринелле тĕксĕмленсе пыракан чечек, теприн вара пачах тепĕр майлă – варринче тĕксĕмрех, хĕрринелле çуталса пыракан чечек тупмалла.
Ачасем ĕçсене туса пĕтерсен воспитатель вĕсене хăйсен чечекĕсем çинчен каласа пама сĕнет.

Сăмахран:

– Манăн нумай çеçкеллĕ кăвак чечек пур. Унăн варри çутă кăвак, хĕрринелле тĕксĕмленсе пырать.

Кайран воспитатель ачасене ӳкерчĕксен театрне пăхма сĕнет.

**Лĕпĕш тата шăнкăрав курăкĕ**
(*Юмах*)

Çуркунне уçланкăра лĕпĕшсем вăраннă. Вĕсем пĕр илемлĕ чечек çинчен тепĕр чечек çине куçса вĕçсе çӳренĕ. Лĕпĕшсен хушшинче пĕр хура-шурăллă хитре лĕпĕш пулнă. Кашни кун уçланкăна вĕçсе килнĕ вăл, чечексен тутлă сĕткенне ĕçнĕ. Çак лĕпĕш уйрăмах шăнкăрав курăкне кăмăлланă. Шăнкăрав юрри питĕ килĕшнĕ ăна. Епле илемлĕ сасă кăларать вăл: шăнкăр-шăнкăр, шăнкăр-шăнкăр. Çак илемлĕ юрра итлесе киленнĕ хайхи лĕпĕш.

Пĕррехинче вăйлă çил тухнă. Вăл лĕпĕше чечексем çине ларма паман, çунаттисене тăлпаланă. Темĕн чухлĕ тăрăшсан та лĕпĕш чечек çине ларайман. Ирĕксĕрех лăпкăрах вырăна вĕçсе кайма тивнĕ унăн.

Çил хытăрах вĕрме пуçланă. Мĕскĕн шăнкăрав курăкĕ çилпе усăнсах аннă.

Çил лăплансан лĕпĕш уçланкăна вĕçсе килнĕ, шăнкăрав курăкне шырама пуçланă. «Ăçта-ши манăн юлташ?» – шухăшланă вăл. Сасартăк сасă илтĕннĕ: шăнкăр-шăнкăр, шăнкăр-шăнкăр. «Ку манăн шăнкăрав сасси-çке!» – савăннипе кăшкăрса янă лĕпĕш. Лĕпĕш юлташне шыраса тупнă, ун чечекĕ çине пырса ларнă. «Салам, шăнкăрав», – хаваслăн чĕннĕ лĕпĕш. «Шăнкăр-шăнкăр», – хуравланă лешĕ. Шăнкăрав чечекĕ те питĕ хавас пулнă лĕпĕше курма.

Хĕвел пăхнă, уçланкăра чечек шăрши сарăлнă, лĕпĕшĕн кăмăлĕ çĕкленнĕ.

Воспитатель ачасенчен шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлет.

Юмах тăрăх çакăн пек ыйтусем пама пулать:

- Уçланкăра мĕн вĕçнĕ?
- Лĕпĕш мĕнлерех пулнă?

- Мĕн тума юратнă вăл?
- Лĕпĕшĕн юлташ пулнă-и?
- Мĕн пулса иртнĕ вĕсемпе?
- Лĕпĕш хăйĕн юлташне мĕнле шыраса тупнă?
- Тĕл пулсан вĕсем пĕр-пĕрне мĕн каланă?
- Лĕпĕшĕн кăмăлĕ мĕншĕн çĕкленнĕ?

*Асăрхаттарни..* Калаçнă вăхăтра ачасене шăнкăрав курăкĕ пек юрласа пама, лĕпĕш пек вĕçсе кăтартма сĕнме пулать; ўкерчĕксемпе усă курса юмаха выляса кăтартма пулать.

## *3-мĕш вăйă.* «Туслă кўршĕсем»

***Тĕллевсем:*** ачасен импровизаци туйăмне малалла аталантарасси; пĕлекен сюжета выляса кăтартма вĕрентесси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** кайăк калпакĕсем.

В ă й ă ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь (*ачасене йывăç çинчи йăвана кăтартса*). Ку – кайăк йăви. Çуркунне вĕсем ăшă çĕртен вĕçсе килеççĕ те йăва çавăраççĕ. Пĕчĕк чĕпписем тухсан вĕсене хурт-кăпшанкă тупса çитереççĕ.

**Чак-чакак**

*(Пўрне гимнастики)*

Чак-чака чакакак,
Чакак пăтă пĕçерет. (*Ывăç тупанне пўрнепе таклаттармалла.*)
Хăнисене йыхăрать,
Алăк тăррине лартать,
Сăмсипе тăвар ярать,
Хўрипеле пăтратать,
Куна кашăк парать, *(Пўç пўрнене хуçлатмалла.)*
Куна кашăк парать, *(Вăта пўрнене хуçлатмалла.)*
Куна кашăк парать, *(Шĕвĕр пўрнене хуçлатмалла.)*
Куна кашăк парать. *(Ятсăр пўрнене хуçлатмалла.)*
Ку ĕçлемен, ним туман – *(Кача пўрнене тытмалла.)*
Ăна кашăк тивмест тет,
Хăваласа ярать тет:
– Кăшша, кăшша, кăшша!

Ачасем аллисене кайăк çунаттисемпе вĕçсе кайнă пек сулласçĕ.

***«Кайăкла» вăйă.***

Вылякансенчен пĕри тилĕ пулать, тепри – кайăк, ыттисем – кайăк чĕпписем.

Кайăкĕ хăйĕн чĕпписене вĕçме вĕрентет: кайăкĕ мĕн тăвать, чĕпписем çавна тăваççĕ. Çунаттисене çирĕплетме аллисемпе хăлаçланаççĕ, кайăк мĕн тунине тимлĕн сăнаççĕ. Чĕпписем çак сăвва каласа вĕçеççĕ:

Вирхĕнетĕп çӳлелле!
Шикленместĕп,
Чĕтреместĕп,
Çавăнпа çĕре ӳкместĕп.
Ух!

Воспитатель ачасенчен кайăксем çинчен ыйтса пĕлет: вĕсем вĕçме пĕлеççĕ-и? Мĕнле юмахра тилĕ вĕçме вĕренетчĕ-ха? (*«Тилĕ вĕçме вĕренни»*). Воспитатель ачасене çак юмаха аса илме сĕнет.

## *4-мĕш вăйă.* **«Пĕрле ĕçлетпĕр»**

***Тĕллевсем:*** ачасен хусканăвне аталантарасси; лайăх туйăмсем çĕклесси; хăйсем тĕллĕн выляма хăнăхтарасси.
***Кирлĕ хатĕрсем:*** шăпăрсем, витресем, лейка; Верук пукане.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель Верук пуканене илсе кĕрет. Вăл саппун çакнă тата тутăр çыхнă. Верук пурне те кил картишне тасатма чĕнет: хĕл хыççăн нумай çӳп-çап пуçтарăннă, вĕсене шăлса тасатмалла.

***«Килĕр, курăр» инсценировка.***
В е р у к.
Шăпăр илтĕм эп алла,
Картишне халь шăлмалла.
Шăпăр тусăм пĕр канмасăр,
Çӳп-çапа шăлса пуçтарчĕ.
Ачасем, эсир те пулăшăр-ха мана.
Ачасем саппунсем çакаççĕ, тутăр çыхаççĕ.
А ч а с е м (*шăпăрсем илсе*).
Шăпăрсем алла илетпĕр,
Çӳп-çапа халь пуçтаратпăр. (*Шăлнă евĕр хусканаççĕ.*)
Йăлт тасатрăмăр эпир, (*Шăпăрсемпе ташлаççĕ.*)
Килĕр, курăр, тап-таса!

Шăпăрсене пуçтаратпăр, (*Шăпăрсене пĕр тĕле пуçтараççĕ.*)
Халь вара, туссем, пĕрле
Выляма та пултаратпăр. (*Ташлаççĕ.*)

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Верук сире тав сăмахĕ калать. Çакăн пек ăста алăсем ĕçсĕр лараймаççĕ. Тата мĕн туса пулăшма пулать-ши? Ӳсен-тăрана шăварса пулăшар мар-и? Тахçантанпах çумăр çуман.

***«Ӳсен-тăрана пулăшни» инсценировка.***

В о с п и т а т е л ь.
Çумăр çук, епле начар,
Чечексем ыйтаççĕ.

Ч е ч е к с е м.
Сывлама çук, пулăшсам,
Пĕр тумлам шыв çеç парсам.

В о с п и т а т е л ь.
Хурама та, çĕмĕрт те
Шăварма ыйтаççĕ.

Ачасем йывăççене шăварнă пек хусканусем тăваçç.
Верук пукане ачасене мухтать, тав сăмахĕ калать.

# Тупмалли

Умĕн калани ........................................................................3
Авăн уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ..................5
Юпа уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ................ 11
Чӳк уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .................. 18
Раштав уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ............29
Кăрлач уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ............36
Нарăс уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ..............43
Пуш уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем.................48
Ака уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .................54
Çу уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ................. 60

**Доброва Надежда Васильевна**

**РАЗВИТИЕ ИГРОВОЙ ДЕЯТЕЛЬНОСТИ
У ДЕТЕЙ МЛАДШЕГО ВОЗРАСТА**

Методические указания для воспитателей дошкольных образовательных организаций,
реализующих образовательные программы дошкольного образования
с детьми 3–4-летнего возраста

Редактор *О.И. Прокопьев*
Верстка *И.В. Матвеевой*

Подписано в печать . Формат 60х90/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Тираж: 50 экз. Заказ № .

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии.
428001, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 5.

Отпечатано в типографии «Перфектум».
г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. 52. Тел.: (8352) 32-05-01